чăваш халăх хаçачĕ

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ХЫПАР

"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

64 /26470/ № Юн кун, 2014, ака (апрель), 9 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

Проект

"Ачасем Интернетра"

Интернет тĕнчи мĕн вăл? Унта ачасем мĕнле хăрушлăхпа тĕл пулма пултараççĕ? Çакăн пирки тата кăсăклă ытти самант çинчен "Ачасем Интернетра" интерактив куравра тата хăрушлăхсăр Интернет урокĕсенче пĕлме май килет. Шăпах çак ятпа республикăри ачасемпе çамрăксен библиотекинче ака уйăхĕн 3-мĕшĕнче вĕренӳпе курав проекчĕ ĕçлеме пуçланă. Ăна "МТС" компани ЧР Информаци политикин, Вĕренӳ тата Культура министерствисем пулăшнипе пурнăçа кĕртет.

Интернета "кĕрекенсен" аудиторийĕ çулсеренех çамрăкланса пырать, паянхи ачасем унпа 5-6 çултанах усă курма пуçлаççĕ. Статистикăпа килĕшӳллĕн – çул çитменнисен 40% пĕтĕм тĕнчери сетьпе карас телефонĕ урлă сыхăнать, çавна май ашшĕ-амăшне ывăлхĕрне ку енĕпе тĕрĕслесе тăма йывăртарах. Çакна шута илсе ачасене Интернетра хăйсене мĕнле тытмаллине пуçламăш классенчех вĕрентмелле.

"Ачасем Интернетра" курава çитсе курни çул çитменнисемшĕн те, вĕсен ашшĕ-амăшĕшĕн те усăллă. Унта пĕтĕм тĕнчери сеть историйĕпе, Интернетра хăйсене тытмалли йĕркепе паллашма, ачасене хӳтĕлемелли ятарлă программа хатĕрĕсем пуррине пĕлме пулать. Курав 6 тема зонине пайланă вăйă лапамне аса илтерет, кашнин хăйĕн ячĕ тата тĕсĕ пур. "Уйрăм Интернет" зонăра, тĕслĕхрен, шăпăрлансем хăйсене ник-ят шухăшласа кăларма тата аватарка суйласа илме, "Хăрушă Интернет" ятлинче – баскетбол "ункине" мечĕк-вируссене ывăтма, "Хаваслă Интернет" ятлинче пĕлĕве тарăнлатакан флешвăйă выляма пултараççĕ. Проектăн тĕп сăнарĕсем – мультфильм геройĕсем Интернешкăпа Митясик. Тĕрлĕ лару-тăру тĕслĕхĕсене илсе кăтартса вĕсем ачасене сетьпе тĕрĕс те хăрушсăр усă курмалли правилăсене вĕренме пулăшаççĕ.

Курав çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕччен – Ачасене хӳтĕлемелли кунччен – ĕçлет. Кăмăл пуррисем унта вырсарни кунран пуçласа эрне кунччен 12-16 сехетсенче çитсе курма пултараççĕ. Çак телефонпа шăнкăравласа малтанах çырăнмалла: /8352/ 52-37-22. Урок программине 1-4 классенче вĕренекенсем валли хатĕрленĕ.

■ **И.БЕЛОВА**

«Дипломат пулас килет»

Раççей Федерацийĕн Ют çĕр-шыв ĕçĕсен министерствин /ЮÇĔМĕн/ Чул хулари представительстви çулсерен çак ятпа регионсен хушшинче конкурс йĕркелет. Кăçалхи – вун пĕрмĕш.

Вăл Раççей Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕн аппарачĕ пулăшнипе иртет. Унта хутшăнма Чул хула, Киров облаçĕсенчи, Мордва, Чăваш, Удмурт республикисен территорийĕнчи аслă пĕлӳ çук тата кăçал вăтам шкултан вĕренсе тухакан, РФ Ют çĕр-шыв ĕçĕсен министерствин тытăмĕнче ĕçлеме кăмăл тăвакан çамрăксене йыхравлаççĕ.

Конкурс тăватă тапхăрпа иртет. Пĕрремĕш тура хутшăнма «Эпĕ мĕншĕн дипломат пуласшăн» эссе çырмалла. Ĕçсене ака уйăхĕн саккăрмĕшĕнчен пуçласа çу уйăхĕн 14-мĕшĕччен электрон почтăпа /mid@mid.nnov.ru/ е çак адреспа – 428000 Шупашкар хули, Ленинград урамĕ, 33-мĕш çурт, 22-мĕш пӳлĕм – ярса памалла. Конкурсăн иккĕмĕш тапхăрĕнче тĕнчери ларутăру çинчен эссе çырмалла, тест ыйтăвĕсене хуравламалла, виççĕмĕшĕнче – «çавра сĕтеле» хутшăнма тивет. Тăваттăмĕш тапхăра хутшăнакансем Чул хулара ЮÇĔМĕн представителĕсемпе тĕл пулĕç. Конкурса çĕртмен 27-мĕшĕнче пĕтĕмлетĕç.

Ю.СТЕПНОВ.

2014 çулăн II çурри валли «Хыпар» тата «Хыпар-шăмат кун» хаçатсене ПАЯН çеç иртнĕ çулхи хаксемпе çырăнтараççĕ. Васкăр, «Хыпарлă» пулăр!

Ĕçе илетпĕр

«Хыпар» хаçат редакцийĕн корректорне ĕçе илмешкĕн конкурс иртет. Унта чăвашла лайăх пĕлекен аслă пĕлӳллĕ çынсем хутшăнма пултараççĕ.

Документсене çак адреспа йышăнаççĕ: Шупашкар, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 3-мĕш хут, 312-мĕш пӳлĕм.

Ыйтса пĕлмелли телефонсем: 56-00-67, 62-08-62.

Çĕнĕлĕх

Пуçарулăхшăн çул уçă

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕнер И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн машиностроени факультетĕнче Чăваш Республикин Çамрăксен инновациллĕ пултарулăхĕн центрне уçма хутшăннă. Çĕнĕ центрпа паллашма çавăн пекех ЧР экономика аталанăвĕн министрĕ Владимир Аврелькин, тĕп хула пуçлăхĕ Леонид Черкесов тата Федерацин çамрăксемпе ĕçлекен агентствин «Наука тата инновацисем» çул-йĕр кураторĕ Виктор Родионов та килнĕ.

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕ

Пухăннисене саламланă май республика Пуçлăхĕ çамрăксен наукăпа, техникăпа çыхăннă пултарулăхĕ экономика конкурентлăхне ӳстерес енĕпе пысăк пĕлтерĕшлине палăртнă, патшалăх пулăшнипе уçнă центра шкул ачисемпе студентсемшĕн хăйсен пултарулăхĕпе ăнăçлă усă курмалли вырăн тесе хаклана. Центра уçма федерацин пĕчĕк тата вăтам предпринимательлĕхе пулăшма уйăрнă укçипе усă курнă, çавăн пекех республика бюджечĕн тата бюджет тулашĕнчи çăл куçсен укçине те явăçтарнă.

«Пире студентсем çĕнĕ технологисемпе усă курса хăйсен идейисене пурнăçламалли майсем кирлĕ. Çĕнĕлĕхсене производствăра ĕçе кĕртни машиностроени аталанăвне хушма хăват кӳрĕ», – тенĕ Михаил Игнатьев. Университет ректорĕ Андрей Александров çак центр инженери пултарулăхĕн культурине çĕклессе, отрасльшĕн кадрсен лаççи пулса тăрасса шаннине палăртнă. Машиностроени факультетĕнче 4-мĕш курсĕн студентки Алина Чистякова кунта вĕренекенсен ячĕпе республика ертӳçисене çамрăксене тĕрев парса пынăшăн тав тунă.

Хăнасем центр ĕçĕпе, проектсемпе модельсен лабораторийĕпе, производство полигонĕпе паллашнă. Центр ертӳçи Владимир Григорьев каланă тăрăх – кунта икĕ çулйĕре аталантарассине тĕпе хурĕç: робототехника тата электротехникăн сăнав площадки. Вăл çавăн пекех лабораторисен майĕсем çинчен каласа панă, унта çамрăксем хăйсен техникăпа çыхăннă идейисене ĕçе кĕртме, вĕренме, модельсем тăвас, машинăсем конструкцилемелли технологисем, строительство, электротехника тата электроника енĕпе пĕрпĕрин опычĕпе паллашма пултарĕç. Çавăн пекех кĕçĕн классенче вĕренекенсем валли те ятарлă курс йĕркеленĕ, унта пĕчĕккисем ашшĕ-амăшĕпе пĕрле çӳреме пултарĕç. Вĕренӳ программинче – çĕнĕ йышши конструкторсем пулăшнипе роботсем тăвасси.

Юлашкинчен Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ЧПУ ректорĕпе Андрей Александровпа ĕçлĕ тĕл пулу ирттернĕ, аслă шкул аталанăвĕн малашлăхне сӳтсе явнă.

■ **К.АНДРЕЕВ**

Ял хуçалăхĕ

Çур аки вăй илет

ЧР Ял хуçалăх министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх – çурхи ĕçсем вăй илсех пыраççĕ. Республикăн кăнтăр районĕсенче – Патăрьел районĕнчи «Батыревский», «Красное Знамя», «Малалла», «Первомайск», «Труд» хуçалăхсенче нумай çул çитĕнекен курăк лаптăкĕсенче нӳрĕк тытаççĕ.

«Батыревский» обществăра нумай çул çитĕнекен курăка 96 гектар апатлантарнă. Çĕр улми вăрлăхне сăмсалантарма «иккĕмĕш çăкăр» управĕнчен 1080 тонна кăларса хӳтлĕхе сарнă.

Çĕр улми вăрлăхне калчалантарма «Малалла» – 115, «Первомайск» 150 тонна кăларнă. Çурхи культурăсен вăрлăхне «Батыревский» – 24, «Красное Знамя» 10 тонна им-çамланă.

Елчĕк районĕнчи «Прогресс» тата «Нива» хуçалăхсен механизаторĕсем ӳсен-тăрана апатлантарма пуш уйăхĕн 26-мĕшĕнчех тухнă. Пĕрремĕшĕнче кĕрхисем 700 гектар йышăнаççĕ. Вĕсене В.Куприянов тĕп инженер тата Д.Кучков тракторист хĕл кунĕсенче меллештерсе ăсталанă удобрени сапмалли агрегатпа, «Туман» хатĕре аса илтерекенскерпе, апатлантараççĕ. Вăл йывăр мар, кустăрмисем путмаççĕ, хăвăртлăхĕ аван. Аммиак селитри кĕрхисене кашни гектар пуçне 35 килограмм /тутлăхлă япала çине куçарсан/ тивет.

Кĕрхисемпе нумай çул çитĕнекен курăка «Эмметово», «Яманчурино», «Сатурн», «Рассвет», «Комбайн», «Победа» хуçалăхсенче пурĕ çĕр-çĕр гектар апатлантарнă.

Вăрнар районĕнчи «Кольцовка», К.Маркс ячĕллĕ, «Знамя», «Санары», «Агрохмель» хуçалăхсенче те çур аки аван пырать. «Мураты» ЯХПК, «Санары», «Агрохмель» обществăсем 155 тонна çĕр улми вăрлăхне калчалантарма сарнă.

● *Елчĕк районĕнчи «Прогресс» обществăра хăйсем ăсталанă минерал удобренийĕ сапмалли агрегатпа тухăçлă усă кураççĕ.*

■ **Юрий МИХАЙЛОВ**



«Пире тĕлĕнтермĕшрен тунă»

Çакăн пек курав уçăлать ыран Вăрнарти историпе тавра пĕлӳ музейĕнче. Ăна Культура çулталăкне халалланă. Экспозицире – Ольга Свойкина алă ăстин ĕçĕсем.

Ольга Канашра пурăнать. Тĕрлĕ пусмаран, тăмран, йывăçран пукане, тетте, интерьер япали, тĕрленĕ тумтир, картина, аксессуар ... ăсталать. Талантлă авторăн ăста аллинче ахаль япала, асамлă юмахри пек дизайнер изделине çаврăнать. Мĕн кăна çук унта! Искусствăна, илеме юратакан кашни çыннах кунта хăйне кăмăла каяканнине тупатех.

А.ГРОМОВА.

Хунар ăсталаççĕ

Улатăр районĕнчи Кивĕ Эйпеç ял тăрăхĕнче тирпейлĕ, илемлĕ, таса пурăнасчĕ тесе ырми-канми тăрăшаççĕ.

Кунта урнăсене, хунарсене, саксене тата ыттине укçалла туянмаççĕ. Вĕсене хĕллехи-çуркуннехи вăхăтра хăйсен вăйĕпе ăсталама тăрăшаççĕ.

Çак кунсенче ял тăрăхĕнче хунарсем тунă. Вĕсене сăрланă хыççăн тĕп урами Çамрăксен культурăпа кану тата Ачасен паркĕсенче вырнаçтарĕç. Ял тăрăхĕн администрацийĕ кăçал çĕрлехи вăхăтра ял урамĕсене çутатма 10 хунар çакма палăртнă. Вĕсем парксемпе урамсен архитектура сăнсăпатне улăштарĕç.

Н.ВОЛЬСКАЯ.

Чунĕпе культурăна парăннă

Культура вучахĕсем ял çыннине илемлĕх тĕнчине илсе кĕреççĕ, кăмăл-туйăмне çĕклеççĕ. Елчĕк районĕнчи Кĕçĕн Таяпари информаципе культура центрне чылай çул Глафира Григорьева ертсе пырать. Нумаях пулмасть Глафира Германовна 55 çул тултарнă. Юбиляр ячĕпе Кĕçĕн Таяпа вулавăшĕнче «Чунĕпе культурăна парăннă» уяв каçĕ йĕркеленĕ.

Унта культура ĕçченне халаллана сăвă-юрă шăраннă. Глафира Германовна çак сферăра – 20 çула яхăн. Вăл пуçарнипе культура центрĕ çумĕнчи пултарулăх ушкăнĕсем районти, республикăри тата регионсен хушшинчи конкурссене тăтăш хутшăнаççĕ. Драма ушкăнĕ «Савăн, çĕнтерӳллĕ çуркунне!», «Çĕнтерӳ ахрăмĕ» республика конкурсĕсенче пĕрре кăна мар дипломант пулнă. Глафира Германовна вара «Чи лайăх режиссура ĕçĕ», «Чи лайăх артистка» дипломсене тивĕçнĕ. Ăна ĕçре пуçарулăхпа хастарлăх кăтартнăшăн ЧР Культура министерствин Хисеп хучĕпе чысланă. Çавăн пекех вăл кĕнекепе çыхăннă республика, район акцийĕсемпе конкурсĕсене хутшăнать.

Р.ИВАНОВА.

Налук калăпăшĕ ӳсĕмлĕ

ФНСăн республикăри управленийĕ пĕлтернĕ тăрăх – кăçалхи пĕрремĕш кварталта Чăваш Енре тĕрлĕ шайри бюджетсене налук органĕсем администрацилекен тӳлевсене 8,3 млрд тенке яхăн пухнă. Пĕлтĕрхи çак тапхăртипе танлаштарсан – 106%.

Çак виçен пĕтĕмĕшле калăпăшĕнче хушма хакран илекен налук тӳпи пысăк – 32,4%. Уйрăм çынсен тупăшĕнчен илекен налук – 28, усламран – 20,2, пурлăхран – 7,4, акцизсем – 6,1%.

Федераци бюджетне 3 млрд тенкĕ хывнă, çак виçе те иртнĕ çулхи кăрлач-пуш уйăхĕсенчи кăтартуран кăшт пысăкрах – 101,5% шайĕнче. Территори бюджетне 5,3 млрд тенке яхăн кĕнĕ, ӳсĕм 8,9% танлашнă (430 млн тенкĕ хушăннă). Çав шутра республика бюджечĕн пайĕ 4,1 млрд тенкĕрен иртнĕ, вырăнсенчи бюджетсен – 1,1 млрд тенкĕ. Республика бюджетне кĕнĕ налуксен калăпăшĕ иртнĕ çулхи çак тапхăрти кăтартăвăн 114,6% танлашнă.

Н.КОНОВАЛОВ.

Çĕнĕ ĕмĕрти ăсчахсем

ЧР Çамрăксен пуçарулăх центрĕнче ăслăлăх-тĕпчев ĕçĕсен «21-мĕш ĕмĕрти ăслăлăх» республика конкурсне пĕтĕмлетнĕ. Унта аспирантсем, студентсем, çамрăк ученăйсемпе специалистсем хутшăннă.

Конкурса 15 ĕç тăратнă, çĕнтерӳçĕсене тĕрлĕ номинацире палăртнă. Экспертсем И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнчи Лилия Метельковăн ĕçне («Информаци-телекоммуникаци системисемпе технологийĕсем») пысăк хак панă. «Хими, нанотехнологисем тата çĕнĕ материалсем» номинацире И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ студенчĕсем Сергей Карповпа Артур Григорьев мала тухнă. Электроника тата робототехника енĕпе Павел Иванова (Шупашкарти электромеханика колледжĕ) никам та çитеймен. Энергетика тата энергие перекетлекен технологисем хатĕрлессипе Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕн студенчĕсем Ирина Ершовăпа Наталия Зуева çĕнтернĕ, «Агропромышленноç комплесĕ тата биотехнологисем» ушкăнра – Александр Волковпа Любовь Прохорова.

Е.АНДРЕЕВ.

ПУБЛИЦИСТ ШУХАШĔ

УÇÇИ-ХУППИНЕ ТУПМА ТĂРĂШАСЧĔ

Çĕнĕ ĕмĕрĕн пĕрремĕш вунă çуллăхĕнче Чăваш Ен халăхĕн пурнăçĕ чылай вăй илчĕ, аталанчĕ. Яллă вырăнта тĕпленнĕ хутлăхсене те пырса тивет сăмахăм. Мĕн пурри куç умĕнче: республикăри пур яла та газ çитернĕ, никĕс шкулсем, пĕтĕмĕшле практика врач офисĕсене уçнă, çулсем тунă. Культура тытăмĕ пирки те çавнах каламалла. 2003 çулта ЧР Президенчĕн ятарлă Указĕпе яллă вырăнти вулавăшсене çĕнетес çул çине тăтăмăр. «Ĕнерхи мĕскĕн те хавшак 500 библиотека вырăнне çĕнĕ йышши 500 библиотека» – çакăн пек тĕллевпе ĕçе пикентĕмĕр.

ЧР Президенчĕ 2007 çулта ял культурипе çыхăннă тепĕр Указа – «Чăваш Республикинче ялти культура учрежденийĕсене аталантарас енĕпе пурнăçламалли мерăсем çинчен» – алă пусрĕ. Мĕне тĕпе хурса йышăннă çĕнĕ документа? Указ клуб учрежденийĕн паянхи тĕнче йышăннă çĕнĕ моделĕсене туса хума май парасса шанса.

Паянхи кун тĕлне республикăра унашкал учреждени 84. Шел те, вулавăшсене «тĕслĕхлетнĕ» хăвăртлăхпа пурнăçланаймасть вăл. Тĕрĕссипе, апла тума май та çук. Искусствăлла майпа «никĕс клублă» пулни уçсинчен ытларах чăрмав кăларса тăратать. Тепĕр чухне иккĕленӳллĕ самантсем те сиксе тухаççĕ. Акă аллăмра «Учреждения культуры и искусства, архивы Чувашской Республики в цифрах /2012-2013гг./» кăларăм. Унăн 19-мĕш страницинче муниципалитет тата патшалăх библиотекисем пирки пĕтĕмĕшле калани пур. Мĕн тĕлĕнтерчĕ-ха? Тĕслĕх вулавăшсенчен хăшне-пĕрне тĕпрен юсама вăхăт çитнĕ те иккен. Унашкалли республикăра – 21. Пĕлес килет: хăш вăхăтра юхăнма ĕлкĕрнĕ вĕсем? Е хăй вăхăтĕнче ячĕшĕн уçнă-и вĕсене? Вырăна тухса çӳренĕ май çакăн пек ӳкерчĕксем те курма тивнĕ: пĕрисене вăл е ку хатĕре парса çитеймен – кайран илсе килме шантарнă, тепĕр тĕлте библиотека çуртне çиелтен якаткаласа, сăтăркаласа илнĕ те вăл «кăтартуллă» пулса тăнă. Кая юлсан каю шăтасси вара пуриншĕн те паллă.

Маларах асăннă кăларăмпа тĕплĕнрех паллашатăп. Ял çынни вулавăшсене хастар çӳрени тĕлĕнтерет. Çĕмĕрле районĕнче 10,1 пин çын пурăнать, Шăмăршă районĕнче – 13,4, Улатăр районĕнче – 15,8. Библиотекăсемпе усă кураксен таблиципе те паллашрăм. Маларах асăннă Шăмăршă районĕнче вĕсен йышĕ 11,6 пин çынпа танлашать, Çĕмĕрле тăрăхĕнче – 8,4 пин, Улатăр хутлăхĕнче – 14,0 пин. Ăнланса çитейместĕп: мĕне тĕпе хурса шута илеççĕ çак кăтартусене? Тĕлĕнмелле пулса тухмасть-и-ха? Сăмахран, Улатăрсенчен 1000 çын ытларахăшĕ çеç библиотекăна çӳремест иккен. Камсем-ши вĕсем? Сăпкара выртакансем-ши? Е вулама вĕренейменнисемпе килтен тухса çӳреймени пулнă ватăсем-ши?

Тата çакна асăхрарăм: чылай районта, халăх йышĕ чакнă пулин те, вулакансен шучĕ сыхланса юлнă е самай ӳснĕ те. Савăнтаракан пулăм. Çав вăхăтрах питĕ шухăшлаттарать те. Иртнĕ çул унти библиотекăсем çĕнĕ кăларăмсене тĕслĕх виçи чухлĕ туянайман пулсан – мĕн вулаççĕ-ши вĕсем? Акă каллех – Улатăра: районти кашни вулавăш вăтамран 92 çĕнĕ кĕнекепе пуянланнă /стандартпа – 250/. Ку енĕпе Елчĕк, Етĕрне, Çĕмĕрле, Красноармейски, Вăрнар, Йĕпреç районĕсен çеç кăтартăвĕсем аван.

Пичет кăларăмĕсем тĕлĕшĕпе лару-тăру мĕнлерех-ха? Тӳрех калам: мухтанмалли çукрах. Пĕтĕмĕшле илсен, республикăри районсенче çак çулăн пĕрремĕш çурри валли çыраннă хаçат-журналăн пĕр библиотекăна тивекен вăтам кăтартăвĕ тĕслĕх вулавăшсен стандартне /13–14/ лараймасть. Муркаш, Çĕрпӳ, Елчĕк, Вăрмар, Комсомольски районĕсене çеç ку енĕпе мухтама сăлтав пур. Çĕмĕрлесем вара пĕр вулавăш валли вăтамран пурĕ те 4,9 экз. çеç çыраннă, Улатăрсем – 5,8 экз., Патăрьелсем – 7 экз., Шăмăршăсем – 6,5 экземпляр.

Çак кăтартусем иккĕмĕш çур çулта тата та пĕчĕкрех пулас хăрушлăх пур. Раççей почти хаçат-журналăн çырăнтару хакне тăруках вышкайсăр ӳстерсе ячĕ. Сăлтавне патшалăх пулăшма пăрахнипе çыхăнтараççĕ. Савăнтарман çак пулăм яллă вырăнти культура учрежденийĕсене татах «пăвассăн» туйăнать. Лару-тăруран тухмалли çул-йĕр ытла та «çинçе».

2014 çул – Культура çулталăкĕ. Унран ыррине, лайăххине кĕтетпĕр. Пулăшасса шанса ларни çителĕксĕрри куç умĕнчех. Библиотекарьсен хăйсен те çаврăнăçулăх, хастарлăх кăтартмалла. Спонсорсене явăçтарма, вырăнта укçа ĕçлесе илме майсем шырамалла. Çав вăхăтрах вĕсене хăйсене кам хӳтĕлĕ? Ялти вулавăшра ĕçлекен библиотекарьсен, çавăн пекех клубпа культура çурчĕсен специалисчĕсен ĕç укçине май килнĕ таран ӳстерсе пыраççĕ пулсан та – вăл тивĕçтермест. Унсăр пуçне çакскерсенчен хăшне-пĕрне 0,5 е тата 0,25 ставкăпа ĕçлеттеренкен тĕслĕхсем те çук мар-ха. Акă мĕнлерех уççи-хуппи çук аптăрав!

■ **Надежда СМИРНОВА**

Çанталăк çинчен

Паян улшăнса тăракан, пĕлĕтлĕ çанталăк пулать. Çил çурçĕр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 3 градус ăшă, çĕрле 4 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 747 мм, сывлăшри нӳрĕк 48 процент.

Кун тăршшĕ 13 сехет те 44 минут.

Ыран хĕвеллĕ çанталăк пулать. Çил çурçĕртен çеккунтра 6 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 1 градус ăшă, çĕрле 5 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 758 мм, сывлăшри нӳрĕк 33 процент.

Кун тăршшĕ 13 сехет те 49 минут.

Тӳрĕ калаçу

Владимир ТИМОФЕЕВ: «Пичет кăларăмĕсемпе çыхăнуçăсен пĕр тĕллевлĕ пулмалла»

Почта ĕçĕ-хĕлĕ халăха тивĕçтернине, хаçат-журнала вулакан патне вăхăтра çитернине уçăмлатассипе çыхăннă ыйтусене «Хыпар» хаçат редакцийĕнче 2014 çулхи ака уйăхĕн 3-мĕшĕнче Федераци почта çыхăнăвĕн Чăваш Енри управленийĕн ертӳçи Владимир ТИМОФЕЕВ хуравласси, вĕсене «васкавлă лини» телефонĕсемпе пама юрани çинчен хаçатра малтанах пĕлтернĕччĕ.

Почта тытăмĕпе çыхăннă çырусем редакцие йышлă килчĕç. Хурав кунĕнче телефонпа шăнкăравлакан та сахал мар пулчĕ.

– Нумай хваттерлĕ çуртсенчи почта ешчĕкĕсене юсаса тăманран, унти хаçат-журнал тăтăш çухалнăран хула халăхĕ пичет кăларăмĕсенчен писрĕ тесен йăнăшмастăп-и? Пĕри çырăнать тĕк тепри унăн хаçат-журналне «сыхласа», «кĕтсех» тăрать вĕт. Çак ларутăруран тухмалли çул-йĕре тупма пулать-и?

– Федераци почта çыхăнăвĕ çинчен калакан саккунпа килĕшӳллĕн нумай хваттерлĕ çуртсенчи абонент ешчĕкĕсене упрасси тата вĕсене пăхса тăрасси пурăнмалли çурт хуçисен тата вĕсене эксплуатацилекен организацисен тивĕçĕ шутланать. Çак ĕçе вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен контрольлемелле.

Енчен те сирĕн подъездри абонент ешчĕкĕсене çĕмĕрнĕ тĕк ыйтăва управляющи компанипе пĕрле татса парăр, вырăнти администрацие пĕлтерĕр.

Кирек мĕнле пулсан та саккун тăрăх çакна пурлăх хуçисен уçăмлатмалла. Ешчĕксене реклама материалĕпе пултаракан курьер компанийĕсем евĕрех, почта та вĕсен юсавлăхĕшĕн явап тытмасть.

– Хаçат-журнал хакĕсене капашсăр ӳстерсе яннинче çыхăнуçăсен «çылăхĕ» пысăкрах пек туйăнать. Чăвашла каласан – «Хамăр ларакан турата хамăрах касатпăр». Хака пĕр май ӳстерсе пыни хамăршăнах тӳнтерле пулса пырать. Тата çырăнтару укçин пысăк пайĕ почтăра юлнине шута илсен хаçат-журнал сарасси вĕсен тĕп ĕçĕ пулмалла пек. Халĕ хаçатçăсем ытларах вĕткеленеççĕ. Çак тивĕçе çыхăну ĕçченĕсен хăйсем çине илмелле. Пĕр енлĕ ĕçленипе /хаçатçăсем тăрăшнипе çеç/ пичет кăларăмĕсем хупăнасси патне çитсе тухмăпăр-ши?

* * *

– Çырăнтару хакĕсене палăрмаллах хăпартни шыва путакан çын улăм пĕрчинчен тытса çăлăнса юлас тенĕ евĕрех пулса тухать. Ку çул-йĕрпе инçех каяймăпăр. Эсир мĕнле шухăшлатăр?

– Раççей почти – нацин çыхăнăвăн универсаллă пулăшăвĕпе тивĕçтерекен оператор. Пирĕн тивĕç çыру корреспонденцийĕсене ярса парасси пулнине çирĕплетет çакă. Асăннă тытăм – социаллă сĕмлĕ тата тăкаклă. Çырăва Калининградран Владивостока çитермешкĕн 15 тенкĕ кăна тăккаланманнине ăнланатăрах. Эпир вара Правительство çирĕплетнĕ çак тарифа тĕпе хуратпăр. Универсаллă çыхăнăвăн тăкакĕсене почтăн тупăшлă ытти ĕçĕн шучĕпе саплаштарма тивет.

2013 çулхи иккĕмĕш çур çултан пире пичет кăларăмĕсене çитерсе панипе çыхăннă тăкаксене компенсацилемелли дотаци пама пăрахрĕç. 2012 çулта республикăри филиал 64 млн тенкĕ илнĕ тĕк, пĕлтĕр – 30 млн. Суммăсен уйрăмлăхне почта хăйĕн тупăшĕн шучĕпе саплаштарнă, анчах малашне çапла тума май килмĕ. Тăкак ӳссех пырать – транспорт валли çунтармаллисĕрмелли ямала туянмалла, ĕçлекенсен шалăвне ӳстермелле, арендăшăн, коммуналлă пулăшушăн, налук тӳлемелле тата ытти те. Аса илтеретпĕр: Раççей почти пĕр çăмăллăхпа та усă курмасть.

Çавна май Раççей Коммуникаци çыхăнăвĕсен министерстви çырăнтару тарифне ӳстерме йышăннă. Экономикăн халăхи условийĕсем çапла тума хистеççĕ тата çакă Раççей почтине субсиди уйăрманнипе ӳссе кайнă тăкаксене саплаштарма май парĕ.

Раççей почти паянхи рынока хутшăнакансемпе танлаштарсан тупăшăвăн пĕрешкел мар условийĕсенче ĕçлет. Альтернатива мелĕпе валеçекенсем юридици сăпатĕнче тăракансене пичет кăларăмĕсене каталогра кăтартнинчен йӳнĕрех хакпа çырăнма сĕнеççĕ. Паллах, пысăк хулара çырăнакансем çав конкурентсем патне куçаççĕ ĕнтĕ. Альтернатива мелĕпе валеçекенсем тĕрĕссипе хаçата район центрĕсене почтăпа ярса параççĕ, мĕншĕн тесен республика тăрăх валеçсе çӳрени вĕсене пайта кӳмест. Патшалăх организацийĕн вара çакна хирĕçлеме право çук.

Пичет кăларăмĕсен канăçсăрланăвне ăнланатпăр, сире те Раççей почтине çăмăл мар лару-тăрура пулăшма ыйтатпăр. Халĕ РФ Патшалăх Думинче почта çыхăнăвĕ çинчен çĕнĕ саккун сӳтсе яваççĕ, асăннă тытăма бюджет субсидийĕпе – универсаллă пулăшу панăшăн та, ăна Инçет Çурçĕр регионĕсене çитернĕшĕн те – тивĕçтерме палăртман. Çав вăхăтрах социаллă, урăхла каласан, тăкаклă тивĕçсене пурнăçлатăр?

– Кунашкал тĕслĕх пирки «васкавлă лини» телефонĕпе шăнкăравласа пĕлтерме ыйтатăп. Тивĕçлĕ мерăсене çиййĕнчех йышăнатпăр.

– Почта уйрăмĕсенче «Тăван Атăл» литература журналне сутассине йĕркелеме май çук-ши?

– Тавара сентре çине кăларса хунипех сутма май килмĕ. Ăна сутăнмалла тумалла, вулаканшăн интереслĕ кăлармалла. Журнал сумне ӳстерес, тавар туянакансем ăна ыйтмалла тăвас тĕллевпе ытларах ĕçлемелле. Эпир почтăн кашни уйрăмĕнчех ăна 400 экземпляр кăларса хума пултаратпăр. Икĕ уйăх иртичен журнала никам та туянмасан «Хыпар» издательство çурчĕ ăна 100 процентĕпех тавăрса панине йышăнать-и? Пирĕншĕн çакă пĕлтерĕшлĕ.

– Хăш-пĕр почта уйрăмĕнче е почтальон чăваш хаçат-журналне мĕншĕн сутмаççĕ?

– Суту-илӳ тапхăрĕнчи кирек хăш коммерсант евĕр эпир те халăх ыйтакан тавара сĕнетпĕр. Енчен те клиент вăл е ку пичет кăларăмне илсе тăрас тет – ăна почта уйрăмĕнче çырăнма е ваккăн туянмашкăн почтальона заявка пама пултарать. Кăмăлне çиййĕнчех тивĕçтересси иккĕлентермест, мĕншĕн тесен пирĕн ĕçченсем ытларах сутмашкăн хăйсем тăрăшаççĕ. Кăларăмсен пĕтĕм ассортиментне пĕрле йăтса çӳремешкĕн почтальона кансĕр. Почта уйрăмĕшĕн те халăх ыйтман кăларăма саккас панин усси çук, мĕншĕн тесен çакă сутăнман тавар шутне ӳстерет кăна. Ăна юрăхсăр тесе пăрахăçлама тивет.

– Шупашкар районĕнчи Тутаркасси ял тăрăхĕнче, Канаш районĕнчи Шăхасанта пулнă чухне «Хыпар» хаçат журналисчĕсене пичет кăларăмĕсене вăхăтра валеçменнине тата вĕсенче почтальонсем çителĕксĕррине пĕлтернĕ. Асăннă ял тăрăхĕсенчи лару-тăрава лайăхлатас тĕллевпе Федераци почта çыхăнăвĕн Чăваш Республикинчи управленийĕ мĕнле мерăсем йышăнма шухăшлать?

– Ыйтăва халĕ татса панă, асăннă уйрăмсен штачĕсене кадрсемпе çирĕплетнĕ.

– Темиçе ял халăхĕн ыйтăвне тивĕçтерсен те почтальонсене сахал тӳлени пирки çырса пĕлтерни редакци почтинче сахал мар. Çав сăлтавпа пичет кăларăмĕсене вăхăтра валеçменшĕн вулакансен шавлама кирлĕ мар иккен. Кун пирки эсир мĕнле шухăшлатăр?

* * *

– Почтальонсем тĕпрен илсен – хĕрарăмсем. Шалăвĕ пысăках мар вĕсен. Çыхăну уйрăмĕсенче кадрсем çитменни çакăнпа çыхăннă ĕнтĕ. Ку ыйтăва татса пама пулать-и?

* * *

– Почтальонсем шалăвĕ пысăкланать-и? Пирĕн тăрăхра ĕçлекенсем укçа сахаллипе пăрахса кайрĕç – пĕр çын темиçе яла хаçат-журнал, тĕрлĕ тавар илсе çӳрет – çавăншăн пире уйăхра 3,5-4 пин тенкĕ тӳлеççĕ.

– Почта çыннисем шалăва бюджетран илмеççĕ, вĕсен ĕç укçийĕ виçи предприятин финанс лару-тăрăвĕпе çыхăннă. Ялти почтальон мĕн чухлĕ ĕçлесе илесси çуран çӳренин тăсăмĕнчен килет, çавăн пекех ăна тавар сутнăшăн хавхалантараççĕ, план тултарсан преми параççĕ.

Раççей почтин генеральнăй директорĕ хăйĕн приоритечĕ сотрудниксен шалăвне ӳстерессипе çыхăннине тата ăна 2016 çулччен икĕ хут пысăклатасси çинчен пĕр хут кăна мар пĕлтерчĕ. Ку енĕпе тунĕ пĕрремĕш утăм – кăрлачăн 1-мĕшĕнче почтальонăн уйăхри ĕç укçине 20 процент хăпартни. Çыхăнуçăсен тупăшĕ майĕпен пысăкланса пырасса шанатпăр. Çакна пурнăçа кĕртмелли тĕп услови предприяти усламне пысăклатасси пулса тăрать тата шалăва тивĕçлĕ шая çĕклемешкĕн укçана малтан ĕçлесе илмелле. Ялта çапла тумашкăн çăмăл мар, мĕншĕн тесен унти уйрăмсенчен чылайăшĕ тăкак тӳсет. Апла тăк пысăк тупăш паракан ытти рынока алла илмелле, вĕсем тăкаксене саплаштарма, малалла аталанма, тивĕçлĕ шалуллă пулма май парĕç. Сăмах мĕнле рынок пирки пынине почта çинчен халĕ Раççей Патшалăх Думинче сӳтсе явакан çĕнĕ саккун уçăмлатĕ.

– Элĕк районĕнчи почтальонсем корреспонденцисене 3 кун кăна салатаççĕ, урăхла каласан вĕсен ĕç эрни 3 куна тăсăлать. Çавна пула «Хыпар» хаçата 2 е 3 хут кăна пырса параççĕ. Пичет кăларăмĕсене хут пухас тĕллевпе çырăнман эпир, республикăри, çĕр-шыври, тĕнчери лару-тăрупа паллашасшăн, ӳсĕме пăхмасăр самана уттипе тан пырасшăн. Ĕненĕр, Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин йывăр çулĕсенче те почта паянхи пек япăх ĕçлемен. Ырă улшăнусемпе савăнтарма шантаратăр-ли?

– Хальхи лару-тăрава шута илсе çывăх вăхăтра пичет кăларăмĕсене эрнере виçĕ хут валеçесси пирки вĕсене кăларакансемпе ĕçлĕ калаçу пырать. Самана çапла тума хистет, урăхла май çук.

– Эпĕ «Хыпар» издательство çурчĕн чылай кăларăмне çырăннă. Шел, юлашки вăхăтра хаçат-журнала вăхăтра валеçменни пăшăрхантарать, эрнере пĕр купа илсе килеççĕ е кăларăмсен номерĕсем арпашăнса çитеççĕ: çĕнни – маларах, кивви каярах килни темиçе те пулчĕ. Унсăр пуçне «Самант» журналăн иртнĕ çулхи 12-мĕш номерне паянчен те тупса параймаççĕ. Мĕншĕн?

– Çакăн пек конкретлă тĕслĕх пирки пирĕн пата çиййĕнчен пĕлтерсен эпир Пушкăртстанри ĕçтешсемпе çыхăнса çитменлĕхсене пĕтермелли майсене пĕрле ыранă пулăттăмăр.

– Шупашкар районĕнчи Чурачăкри çыхăну уйрăмĕ пысăках мар çуртра вырнаçнă, ăна вутăпа хутса ăшăтаççĕ. Çакнашкаллисем татах пур-и? Почта уйрăмĕсене тĕпрен юсасси мĕнле пырать?

– Юлашки 10 çулта 53 уйрăма – çав шутра район центрĕсенче вырнаçнисене пурне те – тĕпрен çĕнетсе улăштарнă.

Кивĕ çуртсенче паянхи куна 48-шĕ юлнă. Халĕ вĕсене модульлипе улăштармалли проектсене хатĕрлес енĕпе ĕçлеççĕ.

– «Хыпар» Издательство кашни кăлларăмне «Раççей почтин» çĕр-шыври каталогне кĕртнĕшĕн, урăхла каласан унта вырнаçтарнă 3-4 йĕркешĕн 11670 тенкĕ тӳлеме тиврĕ. Хучĕ чаплă йышши мар, хаçат çапмалли кăна. Ку кăларăм нумай млн тенкĕ кӳрекен ылтăн кĕнеке пулса тăнине пичет ĕçĕпе çыхăннă çын тӳрех ăнкарать. Çакнашкал йĕркесĕрлĕхĕн вĕçĕ пулĕ-ши? Халĕчченхи евĕр вырăнти каталогпа çырлахма май килмĕ-и?

– Сăмах кунта «Хыпар» Издательство çурчĕ «МАП» ОООпа çирĕплетнĕ килĕшӳ çинчен пынине тӳрех палăртса хăварăпăр. Çакă – сирĕн бизнес, тепĕр организаципе йĕркеленĕ икĕ енлĕ хутшăнусем эппин. Раççей почти унта хутшăнмасть. Эсир çакнашкал çыхăнупа кăмăлсăр тăк ытти партнера суйлама е хăвăр вăйпа çырăнтару агентстви йĕркелеме пултаратăр.

■ **Валентина СМИРНОВА хатĕрленĕ.**

Г.ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕ

Уçă алăксен кунĕсем

Ака уйăхĕн 11-12-мĕшĕсенче Раççейри мĕн пур налук инспекцийĕнче налук тӳлекен уйрăм çынсем валли Уçă алăксен кунĕсем иртеççĕ. Акцие черетлĕ декларацн кампанине халаллана.

Палăртни вырăнлă: республикăри налук органĕсем алăксене кăçалхи пуш уйăхĕн 14-15-мĕшĕсенче те «уçнăччĕ». Ун чухне инспекцисене 2,7 пин налук тӳлекен пынă, вĕсенчен 2,4 пин декларацн йышăннă. Çынсене çакнашкал мероприятисем кирлине çакă та çирĕплетет.

Хальхинче те налук органĕсен ĕçенĕсем килекенсене вăйра тăракан налук саккунĕсемпе, тупăша декларацилемелли йĕркепе, ыттипе тĕплĕ паллаштарĕç. Гражданселмĕн ФНСăн онлайн-сервисĕсемпе, декларацн çырмалли программăсемпе усă курмалли майсем пулĕç. Паллах, специалистсем декларацн хатĕрлеме те пулăшăç.

Акци вăхăтĕнче Чăваш Енри мĕн пур налук инспекцийĕнче декларантсене уйрăм графикпа йышăнаççĕ: ака уйăхĕн 11-мĕшĕнче – 9-тан пуçласа 20 сехетчен, 12-мĕшĕнче – 9-тан тытăнса 15 сехетчен.

■ **Н.ДМИТРИЕВ**

ПĔЛЕС ТЕНĔЧЧĔ...

Конкурспа çирĕплетнĕ

Вăрманлăхсене ертсе пыма камсене çирĕплетнĕ?

Н.ЛАРИОНОВ.
Патăрьел районĕ.

Республикăн Çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министерстви вăрманлăх ертӳçисене çĕнĕрен уйăрса лартас тĕлĕшпе конкурс ирттерчĕ. Унта халĕччен хысна учрежденийĕсен директорĕнче вăй хунисем те /конкурс пынă вăхăтра вăрманлăхсене урăх çынсем ертсе пычĕç/, ĕçлеменнисем те хутшăнчĕç. Унччен директор пулнисем хунав ларттармалли, ăна пăхса çитĕнтермелли, 2010 çулта вут-çулăм иртнĕ лаптăка çунчăкран тасаттармалли, вăрман культурисен йĕкелĕпе вăрлăхне хатĕрлемелли, ытти ĕç тумалли тĕллеве пурнăçлама учрежденисен коллективне мĕнле явăçтарнине тишкертĕмĕр. Хунав лартма, ăна çитĕнтерме, йывăç касма шаннă подряд организацийĕсен ĕç пахалăхне епле тĕрĕслесе тăнине, ытти ыйтăва тĕпчерĕмĕр. Улатăр, Шăмăршă, Канаш, Кире, Сĕнтĕрвăрри, Йĕпреç, Çĕмĕрле вăрманлăхĕсене ертсе пыма Ю.Н.Белякова, В.И.Глухова, Д.Р.Юнусова, А.И.Мартынова, Р.В.Кадушкинăна, А.И.Ахметова, Ю.А.Катейкина çирĕплетрĕмĕр.

Иван ИСАЕВ,
ЧР çут çанталăк ресурсĕсен тата экологи министрĕ.

Ăшăрах, çумăр сахалрах

Çуркунне тата çулла çанталăк мĕнле пулĕ?

Н.СЕМЕНОВ.
Канаш районĕ.

Синоптиксем кăçалхи çанталăк прогнозне тĕпчесе çĕршывăн ытларах пайĕнче сывлăш температури ака-авăн уйăхĕсенче нумай çул кайăлăхи вăтам кăтартупа танлашасса тата термометр юпи темиçе карт çӳлерех хăпарасса пĕлтерчĕç. Ку прогноз 69-72% пурнăçа кĕме пултарать. Федерацин Атăлçи округĕнче çумăр иртнĕ çулсенчи вăтам кăтартуран сахалрах çăвĕ. Çутă уйăхĕсенче вăрмана вут хыпас хăрушлăх пысăк. Ака уйăхĕнче сывлăш температури тата нӳрĕк – норма шайĕнчех. Федераци округĕн ытларах субъектĕнче çу уйăхĕнче сывлăш температури иртнĕ çулсенчи вăтам кăтартуран пысăкрах, нӳрĕк нормăра палăртнинчен сахалрах. Вăл çĕртме уйăхĕнче те сахалрах ӳкĕ. Сывлăш температури нормăна çывхарĕ. Округăн нумайрах регионĕнче утă уйăхĕнче сывлăш ăшăрах пулĕ, çумăр нумай çулăн вăтам кăтартăвĕ чухлех çăвĕ. Раççейре çу уйăхĕнче нӳрĕк тата сывлăш температури нормăпа шайлашăнса тăрĕç. Округăн пысăкрах пайĕнче аван уйăхĕнче ăшăрах, çумăр 2013 çулхинчен сахалрах пулĕ. Тури Атăл Гидрометеоцентрĕ /Чăвашгидрометеоцентрĕ ăна пăхăнать/ çак пĕтĕмлетĕве уйăхри, кашни вунă кунри, кулленхи прогнозпа танлаштарса пĕчĕк улшăнусем кĕртсе пырĕ.

Сергей МАКСИМОВ,
Чăвашгидрометеоцентр ертӳçи.

Ытлашши ӳстерме юрамасть

Çăкăр, кулач, премĕк-канфет хакне правăн хăш акчĕпе килĕштерсе палăртаççĕ?

Н.ПЕТРОВ.
Вăрмар районĕ.

Çĕр-шывăн шалти рынокĕнчи производство-техника продукцийĕн, халăха куллен кирлĕ таварăн тата пулăшу ĕçĕн /вĕсен хакне /тарифне/ патшалăх йĕркелет/ йышне Раççей Федерацийĕн Правительствин 1995 çулхи пуш уйăхĕн 5-мĕшĕнчи «Патшалăх хаксене /тарифсене/ йĕркелесе тăрасси çинчен» 239-мĕш йышăнĕвĕпе çирĕплетнĕ. Унпа килĕшӳллĕн патшалăх тӳрремĕнех çăкăр-булка, кондитер изделийĕсен хакне йĕркелесе тăмасть. Çапах та ача-пăча апачĕн, çав шутра апат концентрачĕн хушма хакне мĕн чухлĕ хăпартнине сăнаса тăрать. Ытти апат-çимĕç хакне курттăммăн тата ваккăн сутакансем хăйсем пĕлнĕ пек лартаççĕ. Раççей Федерацийĕн Правительствин 2010 çулхи утă уйăхĕн 15-мĕшĕнчи социаллă пĕлтерĕшлĕ апат-çимĕçĕн хăш-пĕр тĕсĕн хакне çирĕплетесси çинчен калакан 530-мĕш йышăнăвĕ патшалăха хăш-пĕр продукци хакне пĕр шайра тытса тăма май парать. Калăпăр: тивĕçлĕ служба федерацин вăл е ку субъектĕнче ваккăн сутакан апат-çимĕçĕн социаллă пĕлтерĕшлĕ тĕсĕсене, ку шутра ыраш, ыраштулă, тулă çăнăхĕнчен пĕçернĕ çăкăр-булка изделийĕсене 30 кунта 30% тата унтан ытларах хаклатнине тĕрĕслев йĕркелесе çирĕплетнĕ. Кун пек чухне РФ Правительстви регионта сутакан социаллă пĕлтерĕшлĕ таварсен хакне 90 календарьлă кун валли саккунпа килĕшӳллĕн çирĕплетет.

Альбина ЕГОРОВА,
ЧР конкуренци политикин тата тарифсен патшалăх службин ертӳçи.

Вирус лексен – вĕлерет

Республикăра кăçал вăрман чĕр чунĕ, килти выльăх урнă тĕслĕхе шута илнĕ-и?

О.ПЕТРОВА.
Комсомольски районĕ.

Уртаракан чир тупса палăртнă пирки пушăн 12-мĕшĕнчен Вăрнар районĕнчи Катăш ялĕнчи М.Александров килти хуçалăхне, пушăн 28-мĕшĕнчен Шăмăршă районĕнчи Кивĕ Чукал ялне, акан 1-мĕшĕнчен Канаш районĕнчи Малти Тукай ялĕнчи Л.Романова килти хуçалăхне карантина хупнă. Килти хуçалăхсенчен тата Кивĕ Чукал ялĕнчен выльăха урама кăларма, выльăх апатне турттарса тухма юрамасть. Ветспециалистсем килти хуçалăхсенче амак вирусне пĕтерес, медицина ĕçченĕсем чирлĕ чĕр чунпа хутшăннă çынсене инкекрен хӳтĕлес тĕлĕшпе тивĕçлĕ ĕç пурнăçлаççĕ. Кивĕ Чукала пĕтĕмпех карантина хупма тиврĕ, мĕншĕн тесен унта мур темиçе вырăнта сарăлнă. Вăл икĕ килти хуçалăхри ĕнепе пушмак пăрава тилĕрен ернĕ. Иккĕшĕ те вилнĕ. Ветспециалистсем темиçе уйăх каялла Кивĕ Чукалта килти хуçалăхсенчи выльăха уртаракан чир ересрен тӳлевсĕрех вакцинациленĕ. Анчах ăна пула шар курнă çемье усал муртан вăхăтра прививка тутарса хӳтĕленмен. Кил хуçи тĕлĕшпе административлă ĕç пуçарса явап тыттарма тивет. Республикăн Сунарçăсемпе пулăççен патшалăх службине Çĕрпӳ, Вăрнар, Канаш, Шăмăршă районĕсенче тилĕ шутне чакарма хушнă.

Сергей СКВОРЦОВ,
ЧР ветеринари патшалăх службин ертӳçи.

Йĕркене пăхăнса тытмалла

Кăçал çуркуннехи сунар тапхăрĕ хăçан иртĕ?

Р.СЕЛИВАНОВ.
Патăрьел районĕ.

Республика Пуçлăхĕ ăна ака уйăхĕн 20-29-мĕшĕсенче йĕркелеме ирĕк панă. Çак тапхăрта ăçан açине, тĕрлĕ йышши кайăк хура, кайăк кăвакал açине, вальдшнепа пăшалтан персе тытма юрать. Кӳлĕ-пĕвене хурсем вĕçсе килсен сунарçă йăшăлтатнине ан сисчĕр тесе шыв-шур таврашĕнче вырнаçтарнă ӳплере пытанма, кăвакал açине йышран уйăрса кăлармашкăн шыва пластик кăвакал ярса илĕртме пултаратăр. Кимĕрен, çыран хĕрринче çӳресе пăшалтан пеме чарнă. Вальдшнепа каç кӳлĕм çеç тытма юрать. Паллах, паян кирек камăн та пăшал туянмалăх укçа пур. Анчах патшалăх службинчен кайăкçă удостоверенине илнĕ-и? Сунар вырăнне унсăр пăшал çакса каймалла мар. Кайăк тытма службăран ирĕк илнĕ-и? Лицензисĕр килтен ан та тухăр.

Владимир КУЗЮКОВ,
ЧР сунарçăсемпе пулăççен патшалăх службин ертӳçи.

Хăш предприятисем пуян?

Чăваш Енри мĕнле организацисен укçа-тенкĕ çаврăнăшĕ пысăк?

А.ЯКОВЛЕВ.
Йĕпреç районĕ.

2013 çулта республикăри 31 предприяти туса кăларнă продукци калăпăшĕ миллиардшар тенкĕпе танлашнă. Ку йышра – «АККОНД», «Мари Эл тата Чăваш Ен», «Промтрактор-Промлит», «Август» АО филиалĕ, «ЭЛАРА», «Химпром», «Промтрактор-Вакун», «Промтрактор», «Коммуналлă технологисем», «ЭКРА», «Шупашкар ГЭСĕ», «ЧАЗ», «Чăвашэнерго», «ШЗСА», «ЧЭАЗ», «ВНИИР», «КАФ», «Чăвашкабель», «Чăваш Ен Букечĕ», «Сеспель» Шупашкарти предприяти», «КААЗ», «Чăвашсетьгаз», «В.И.-Чапаев ячĕллĕ ЧПП», «Чăвашторгтехника», «Бреслер», «Элинокс», «ЧЭТА», «Дорисс», «Чăвашавтоçул», «СУОР», «ЖБК-9». Вĕсем республикăри промышленноç продуцийĕн 57% туса кăларнă. Вĕсенче 41 пин ытла çын /промышленноçра ĕçлекенсен 43%/ вăй хурать. Чăваш Енре 2011 çулта – 25, 2012 ç. 27 миллиардçă пулнă. Пĕлтĕр вĕсен шутне кĕнисем – «СУОР», «ЖБК-9», «Чăвашторгтехника», «Бреслер», «Элинокс», «ЧЭТА», миллиардçăсен йышĕнчен тухса ӳкнисем – «Молочное дело», «Перкарбонат».

Фабрикăсем лайăх тӳлеççĕ

Иртнĕ çул хăш районсенчи ял хуçалăхĕн пысăк тата вăтам предприятийĕсенче вăй хуракансем кашни уйăхра вăтамран чи нумай ĕçлесе илнĕ?

Р.ЗАХАРОВА.
Çĕрпӳ районĕ.

Шупашкар районĕнче – 16054,4 тенкĕ, Çĕрпӳ районĕнче – 11689,5. Пĕрремĕшĕнчи «Шупашкар бройлерĕ», «Чăваш бройлерĕ», «Юрма» агрофирма» , «Ольдеевская», иккĕмĕшĕнчи «Çĕрпӳ беконĕ» обществăсенче вăй хуракансен вăтам шалăвĕ республикăри организацисенче ĕçлекенсен вăтам ĕç укçине çывхарнă. Çавăнпа пĕрремĕшĕнче аванах, иккĕмĕшĕнче республикăн вăтам кăтартăвĕнчен 726,9 тенкĕ ытларах ӳкнĕ. 2012 çулхипе танлаштарсан ĕç укçи Куславккасен – 60,9%, Сĕнтĕрвăррисен 25,5% ӳснĕ, Çĕмĕрлесен 9,6% чакнă. Вăл Сĕнтĕрвăррисен /6898,2 тенкĕ/, Улатăрсен /7399,2/, Йĕпреçсен /7632,2/, Çĕмĕрлесен /8070,7/ пĕчĕк. Республикипе 10962,6 тенкĕ /2012 çулхинчен 13,4% пысăкрах/ пулнă.

Юрий МИХАЙЛОВ хатĕрленĕ

Хушма кăларăм

Вёренӳ

Çивĕч ыйту

Хамăр чан çапмасан

Урăхла нимĕнле сăмах та тупса калаймăн: шкулти вёренӳ программинче тăван чĕлхепе тата культурăпа çыхăннă предмет сехечĕсене сахаллатсах пынине курса тăнăран ăна ура хунă пекех туйăнать. Мĕнех тăвăн: федерацин Патшалăх вёренӳ стандартне çирĕп пăхăнма тивет тетпĕр-çке. Регионсенче наци чĕлхипе литературине, культурине мĕнле майпа вёрентессине те хайхи çав «калăп» виçине лартмалла. «Калăпĕ» вара асăннă предметсемшĕн хĕсĕнсех пырать.

21-мĕш ĕмĕрте чăваш чĕлхин пуласлăхĕ пирки пăшăрханмасăр май çук: хулара çеç мар, ялсенче те çитĕнекен ăру тăван чĕлхерен писсе пыни куç кĕрет. Çакнашкал кăткăс лару-тăрура шкулта асăннă предметсен сехечĕсене сахаллатни глобализацие пушшех хăвăртлатать. Ĕнер-хи-паянхи чăваш çыравçисен хайлавĕсене те çиелтен кăна йĕрлесе тухас тăк /сахал урокра мĕн туса ĕлкĕрмелле?/, çыру сехечĕсенче чĕлхе правилисене ячĕшĕн кăна шăйăркалас пур – ачасене тăван чĕлхене хисепе хума епле хăнăхтармалла-ха? Чун ыратăвĕпе тулнă çак ыйту каллех чан çапма вăхăт çитнине палăртать...

Пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи хулара-ионта чăваш чĕлхипе литературине вёрентекенсен секцийĕсен /меслет пĕрлешĕвĕсен/ ертӳçисен «Чăваш чĕлхипе тăван ен культури предметчĕсен паянхи шкул вёрентĕвĕнчи вырăнĕ» семинар иртрĕ. Канашлăва ЧР Вёренӳпе çамрăксен политикин министерствин специалисчĕ Татьяна Николаева, ЧР Вёренӳ институчĕн чăваш филологийĕпе этнокультура кафедрин пуçлăхĕ Юрий Виноградов доцент, «Хыпар» Издательство çурчĕн директорĕтĕп редакторĕ, ЧНК вице-президенчĕ Алексей Леонтьев, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ, И.Я.Яковлев ячĕллĕ ЧППУ доценчĕсем Анна Егоровăпа Евдокия Андреева, Чăваш Республикин учителĕсен ассоциацийĕ çумĕнчи секци ертӳçи Геронтий Никифоров, Гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн социолингвистика пайĕн тĕпчевçи Эктор Алос-и-Фонт, 40 ытла вёрентекен хутшăнчĕç. Чăваш наци конгресĕн хастарĕсем /Юлия Анисимовăпа Эдуард Бахмисов/ те пурччĕ – пысăк явапăха ку организаци ӳлĕм тата вăйлăрах туяссине ĕненес килет.

Паянхи шкулăн вёрентӳ хăйне евĕрлĕхĕ çинчен каласма пуçличчен «Хыпар» ИÇ ертӳçи Алексей Леонтьев сăмах илчĕ. Чăвашлăха сыхласа хăварасси-пе тӳррĕн çыхăннă йăхташсемпе чун уççи евĕр калаçăвĕнче халăхăмăрăн историне аса илчĕ, паянхи тăрăмне хак пачĕ, пуласлăхне те тинкерчĕ вăл. Кашни чăваша ĕнчĕ пек хакласа вăя, ăс-тăна пĕр чăмăра пĕтĕçтерес вырăнне хăшĕ-пĕри шухăшсене арăш-пирĕш сапаланине /чăвашăн тăхăмĕ пăлхар е сăвар çынни пулни пирки пыракан тавлашу тĕлĕшпе/ ăнланманнине палăртрĕ. Массăллă информаци хатĕрĕсен холдингĕн ертӳçи паян çамрăк ăрăвăн вулав культури уксахланишĕн те чунтан пăшăрханать. Республикăра тĕпленсе пурăнакан 870 пин чăвашран çурри тăван чĕлхепе çырма-вулама пĕлменни ыранхи кунăн ӳкерчĕкĕ лайăхрах пуласса шантарма ниепле те пултараймать. Мĕнре-ха çăлăнăç? «Такам пирĕн шăпана йĕркелессе шанни ура хурать пире. Улшăну – шухăшлав улшăнавĕ – хамăртан пуçланма тивĕç. Чуна мăкатас марччĕ – çакă чи кирли», – тĕп шухăшне çапла палăртрĕ А.Леонтьев.

Мускавра çӳç касма хушсан пирĕн енре пуç касма пуçлаççĕ тени чăнлăхпа килĕшсех тăрать пулас. 9-мĕш класран вёренсе тухакансем патшалăх экзаменĕн аттестацийĕ витĕр тухнă чухне тăван чĕлхепе халĕччен изложени çыраканччĕ. Кăçал вара ку экзамен пăрăнмисен мар /обязательнăй/, суйласа илмеллисен шутĕнче пулĕ. Чиновниксем, паллах, тӳррĕнех Раççей Вёренӳпе ăслăлăх министерстви çирĕплетекен нормăсене пăхăнаççĕ. Чăваш чĕлхипе литературине экзамен тытма суйлакан вара... «Аран-аран районĕпе /пирĕн хутлăхра 27 шкул/ 28 вёренекен пухрăм», – чунĕнче капланнă ыратăвне ĕçтешĕсемпе пайларĕ Канаш район администрацийĕн вёренӳ пайĕн методисчĕ Елена Иванова. Елчĕк районĕнче чăваш чĕлхипе литературине вёрентекен Нина Левая экзамена муниципалитет шайĕнче те пулин пăрăнмисен шутĕнче хăварма сĕнчĕ.

Çивĕч тепĕр ыйту – вёренӳ кĕнекисем хатĕрлесси. Юрий Виноградов шухăшĕпе – çĕнĕ стандартсем вăя кĕнĕ майăн учебниксен те улшăнмалла. Унччен-рех республика хăйĕн стандартне тума пултарнă тăк халĕ апла ирĕк çук. Çавна май малтан – тĕслĕх программăна, кайран авторсен программисене çирĕплетме тивĕ. Хула шкулĕсенче чăваш литературине хайлавсен вырăсла куçарăвĕсемпе кăна вёрентни те педагогсене тивĕçтермест. Хрестоматисенче чăвашла текстсем кирлех тесе шухăшлать чылайăшĕ. Вёренӳ кĕнекинче стандартпа килĕшӳллĕн ыйтусен ушкăнĕ пулма тивĕç. Шел, халĕ 10, 11-мĕшсем усă куракан кĕнекере вăл çук.

Шупашкар районĕнче Кăшавăш шкулĕнче тăрăшакан Евгений Майков сăмахĕ темĕнле хытă чĕреллĕ йăхташа та витерсе шухăшлаттарĕ:

– Шкул алăкĕ тăррине «Килĕрех!» тесе çырнă питĕ илемлĕ хăма вырнаçтарнăччĕ. Мускавран килнĕ пĕр-пĕр тӳре мар, районăн вёренӳ управленийĕн пуçлăхĕ хушнипе илсе пăрахтарчĕç ăна. Пĕрремĕшĕнчен, чăвашла хапăл тăвассин йĕрки-майне пĕлсех кайманран-ши, сăмах форми килĕшмен имĕш. Иккĕмĕш сăлтавĕ те кăсăклă: «Мĕншĕн чăвашла кăна ырă сунатăр?» Иккĕленместĕп, тутар ялĕнче вырăсла «Добро пожаловать!» тесе çырма «маннăшăн» ятлас шухăш никамăн пуçне те пырса кĕмĕччĕ. Усламçă тупăш илес тесен хăйĕн ĕçне мухтамаллине лайăх ăнланать. Ăнăçăвăн 75 процентĕ рекламăпа çыхăннине питĕ лайăх пĕлет. Эпир кăна хамăра хисеплеттересси мĕнрен килнине чухлама ниепле те хăнăхаймастпăр...

Хамăрăн чи пысăк тупрана – тăван наци культурине – тивĕçлĕ шая хуманни вактĕвекрен те сисĕнет. Муниципалитетсенчи вёренӳ пайĕсене акă асăннă семинара хутшăнмашкăн йыхрав чылай маларах ярса панă. Шел, пур çĕрте те информацие вăхăтра пĕлтермеççĕ-мĕн. Республика шайĕнче иртекен конкурс-фестиваль пирки те хӳре вĕçне туй килсен хыпарлани – хăнăхнă пулăм. Мероприятие тивĕçлĕ шайра хатĕрленсе ирттерсен такамран малта пуласран шикленетпĕр-ши?..

Усси пуласса шанакансем сахаллăн пулин те – семинар темиçе йышăну турĕ.

1. ФПВСа /Федерацин патшалăх вёренӳ стандарчĕ/ тивĕçтерекен чăваш чĕлхи тĕслĕх программинчи çĕнĕлĕхсене вёрентӳре пурнăçа кĕртмелле.

2. Шкул вёрентĕвĕнче, шкул валли кăларакан кĕнекесенче хальхи орфографие çирĕп пăхăнма ыйтас. Кивĕ орфографие тавăрас шухăш паян вырăнсăр пулнине палăртас.

3. Интернет тата информацин ытти хатĕрĕ вăйлă аталанса пыракан тапхăрта республикăн чăваш чĕлхи кашни вёрентекенне пурнăçпа тан утма, вёрентĕве кирлĕ шайра йĕркелесе пыма компьютерпа тивĕçтерме майсем тупмалла.

4. Чăваш шкулĕнчи 9 класс пĕтерекенсемшĕн чăваш чĕлхипе, 11 класран вёренсе тухакансемшĕн чăваш чĕлхипе тата литературипе пăрăнми патшалăх экзаменĕ кĕртме ыйтас.

5. Хула шкулĕнчи чăваш чĕлхи урокĕсене ачасене икĕ ушкăна пайласа вёрентесси, чăваш чĕлхине 3 сехет вёрентесси çирĕп йĕрке пулмаллине палăртас.

6. Хула шкулĕсен 9-мĕш класĕнче чăваш чĕлхи вёренсе пĕтерекенсен пĕлĕвне тĕрĕслеме-хаклама тĕрлĕ мел – экзамен е зачет, калаçу /собеседовани/ суйласа илес йĕркене кĕртмелле. /.../

Паллах, 23 пунктран тăракан резолюцие хаçатра туллин пичетлеймĕпĕр. Шкулччехи вёренӳ тытăмĕнче паян чăваш чĕлхине вёрентекен специалистсем çукки, республикăри хăш-пĕр шкулта «Тантăш», «Хыпар» хаçатсене çырăнса илменни, вёренӳ учрежденийĕсенче чăвашлăхпа çыхăннă кĕтессем йĕркелеменни... – темшĕн те пăшăрхантарать семинара хутшăннисене – çивĕч кашни ыйтупах уйрăм йышăну турĕç. Чун ыратăвĕпе тулнă çав çыру, ахăртнех, Чăваш Республикин Патшалăх Канашне, Вёренӳпе çамрăксен политикин министерствине, Чăваш наци конгресне çитнĕ те. «Çӳлтисем» хутшăннăран ырă мĕнле-тĕр улшăну пулĕ-и е пĕтĕм ĕçпуçа хут чĕркелессипе çыхăнтарса çырлахăпăр-и – вăхăт кăтартĕ.

■ **Ирина ПУШКИНА**

Мал туртăм

Амăшĕпе хĕрĕ – яланхи шыравра

Вёрентекенĕн ачи... Чылайăшĕ ун тĕлĕшпе иккĕллĕ шухăшлать. Пĕр енчен, шкулти мĕн пур вёренекеншĕн учитель хĕр-ывăлĕсĕр пуçне тата камăн чи лайăх тĕслĕх пулмалла-ха? Тепĕр енчен – хăш-пĕриншĕн çакнашкал вёренекенсем чи телейлисем, çапла мар-и? Ара, ашшĕ е амăшĕ шкулта вёрентет тĕк ачи пĕлӳ енчен уксахласан та начар паллă лартса кӳрентермеççĕ тесе татăклăн пĕтĕмлететпĕр вĕт. Анчах кунашкал шухăш чăнлăхпа яланах килĕшсе тăмасть. Хăйсен тĕпренчĕкĕсенчен чăнахах ыттисенчен çирĕпрех ыйтакан вёрентекенсем те, телее, пур-ха. Тĕслĕх-и? Атьăр эппин, вĕсемпе паллашар.

Çынпа хутшăнасси илĕртет

Вăрмар районĕнчи Чупайри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта тăхăрмĕш класра ăс пухать Анастасия Петрова. «Комсомолка, спортсменка, чиперкке...» – совет тапхăрĕнче халăхра анлă сарăлнă каларăш ун çинчен тейĕн. Дневникĕнче – чи лайăх паллăсем, портфолио тĕркинче – тĕрлĕ конкурсра малти вырăн çĕнсе илнине çирĕплетекен хутсем. Баскетболла вылять, шкулта иртекен пĕр мероприятирен те юлмасть. Пĕр вăхăт вăл журналист профессийĕ çинчен ĕмĕтленсе хĕмленнĕ. Халĕ вара ытти кăсăклă специальноçсен ытамĕнче: хăшне суйласси пирки тĕплĕн шухăшлать. «Кирек темле пулсан та мана çынсемпе калаçмалли ĕç кирлĕ», – уççăн калаçать вёренекен.

Чăн-чăн патриот туйăмĕ унра. Çакна вăл Раççейре иртнĕ «Места России, которые стоит посетить» ăслăлăх-практика конференцине хутшăнни те аван çирĕплетет. Форум валли районти чылай ача республика тулашĕнчи вырăнсем çинчен тĕпчевсем хатĕрленĕ тĕк – Чупай хĕрĕ пуриншĕн те кăсăклă вырăна тăван Чăваш Енрех «шыраса тупнă». Муркаш районĕн территорийĕнчи вăрманта «Кĕмĕл каскад» шыв сикки пурри çинчен пĕлнĕ те... Районти жюри Настьăн презентацине чи лайăххи тесе йышăннă.

Чăваш чĕлхипе литературине асăннă шкулта Людмила Александровна Цифаркина вёрентет. Халăх ăс-хакăлне çав тери сума сăвакан, педагогикăна чунтан парăннă çын çитĕнĕвĕ – куç умĕнче. Акă Н.Петрова та асăннă предметсемпе иртнĕ олимпиадăра республика тапхăрăнче малтисен ретĕнче пулнă.

– Аннӳ, Эльза Александровна, ку шкултах ĕçлет иккен. Уншăн та пуçламăш классенче юратнă вёренекенĕ пулнă-и эсĕ? – вăлтса ыйтатăп Настьăран.

Хĕр ачан унăн урокĕсенче ларма тӳр килмен-мĕн. Хăйĕн хĕр пĕрчийĕ пĕлӳ тĕнчипе паллашма тытăннă çулсенче Э.Петрова кӳршĕ ялта ĕçленĕ.

Лаша пуласси – тихаран...

Сăпайлă хĕрарăмпа хамăрăн калаçăва паянхи вёрентӳ тавра йĕркелерĕмĕр. Эльза Александровна вёрентекен 3-мĕш класа Чупай, Патти, Мăнтăр ялĕсенчен 10 ача çӳрет. Хула шкулĕсенчи практика – ачасене пĕлӳлĕхне кура ушкăнсене пайласси – ялта вăй илеймĕ: вёренекен шучĕ капла та питĕ сахал.

– Педагогăн паянхи ĕçĕ-хĕлĕ пирки сăмах пуçарсан институтри лекцисем тӳрех асăма килеççĕ. Шкулта чĕрĕк ĕмĕре яхăн ĕçленĕ май пĕтĕмлетĕвĕм çапла: пурнăç кĕнекере вёрентнинчен раснарах, çав-çавах темĕнле йывăр лару-тăруран та педагогăн чысне ӳкермесĕр тухмалла. Акă паянхи саманан хăйне евĕрлĕхне илер. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем саланнине пула ялсенче ниçта ĕçлемен çын чылай. Хăш-пĕр ашшĕ-амăшĕ /асăрхăр: хĕрарăмсене те асăнтăм/ ĕçке иленнишĕн чун ыратать. Ачин урок тумалла – унашкаллисемшĕн тĕнче тикĕс. Учитель вара аран вёренекене те «сĕтĕрет». Анчах аслисем ăс памасан пепки учитель тăрăшнине хаклама ăçтан пĕлтĕр? Сăвă пăхмасăр калама хăнăхасси мар, теплере пĕрре ĕçлесе илнĕ укçипе ашшĕ илсе панă планшетник илĕртет ăна, – чунне уçса калаçать кĕçĕн классен вёрентекенĕ.

Эльза Александровнăшăн патшалăх стандартĕсен программине пурнăçласа пыни кăна мар, çитĕнекен ăрăва пурнăçра арпаштаракан çул-йĕртен пăрăнма хăнăхтарни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Класс сехечĕсене йĕркеленĕ чухне çакна шута илет те.

Хăйĕн ачисене мĕнлерех витĕм кӳрет-ха вăл шкулта ĕçлени? Ывăлĕ Костя шкулпа сыв пуллашнă та ĕнтĕ, Шупашкарти электромеханика колледжĕнче ăс пухать. Вăл та, Настя та вёренӳре тăрăшуллă пулнăран хĕпĕртет амăшĕ. Пĕр-пĕр предмета ачисене хистесех шĕкĕлчеттересси йăлара нихăçан та пулман. Настя мĕнле проектпа, хăш конкурса хутшăнассине амăшĕ кая юлса кăна пĕлет. Çавăнпах хĕрĕн кăтартăвĕсемшĕн тата та ытларах хĕпĕртет-мĕн.

– Унăн пушă вăхăт сайра хутра кăна тупăнкалать. Апла пулин те килти хуçалăхри ĕçсене явăçтармасăр хăвармастпăр. Ачашланипе кăна пурнăçа тĕрĕс хаклама вёрентеймĕпĕр, – Настьăна мĕнлерех воспитани пани амăшĕн çак сăмахĕсенчен аван курăнать.

...Акă уроксем вĕçленчĕç. Шкултан шавласа тухакан вёренекенсен ушкăнĕнче «учитель ачи» те пур. Амăшĕ те, ашшĕ те /Николай Леонидович Канаш хулинче ĕçлет/ ĕçрен часах таврăнаймĕç. Килне çитсенех Настя витери выльăха тăрантарма васкĕ.

■ **Анна КУПРИЯНОВА**

Хăна

«Шупашкар çутисене манмăп»

Хĕллехи каникул хыççăн Шупашкарти уйрăм предметсене тарăннăн вёрентекен 37-мĕш шкула ачасенчен чылайăшĕ куллен хавхаланса çӳреме тытăннă. Сăлтавĕ акă мĕнре. Кунта Германирен Тюбингенри Эйберхардпа Карл университетĕнче филологи факультетĕнче виççĕмĕш курсра вёренекен нимĕç хĕрĕ Карина Фрис практикăна килнĕ.

Йăхташсен çĕрĕнче

Одессăра çуралса ӳснĕ вырăс нимĕçĕ Бертхольд Гейгер мăшăрлансан Çĕпĕрти Рубцовск поселокĕнче, Раççейпе Казахстан чиккинче, тĕпленсе пурăнма тытăннă. 35 çул каялла Гейгерсем виçĕ ачипе Германири Тюбинген хулине /Штудгардран 35-40 çухрăмра/ куçса каяççĕ. Çемье кун-çулĕн пуçламăшне – вырăссен хушшинче пурăннине – аса илтерекенĕ хăйсен мăнукĕ пуласса Гейгерсем тĕлленмен те ахăр.

Вĕсен кĕçĕн хĕрĕн Эльвирăн пĕртен пĕр хĕрĕ – Карина – мĕн пĕчĕкренех йăхташĕсемпе кăсăкланнă. Юратнă кукамăшĕпе Валентина Александровнăпа килте юлсан вырăсла перкелешнĕ. 10-12 çултах хĕр ача çитĕнсен хăйĕн йăхташĕсем патне çитсе курăп тенĕ. Икĕ çул каялла ĕмĕтне пурнăçланă.

– Рубцовскра халĕ кукамайăн пĕр тăванĕсен ачисем пурăнаççĕ. Аслăрах ăрурисем вилсе пĕтнĕ. Эпир килсен питĕ хĕпĕртерĕç. Вырăссем хăнасене ăшшăн йышăннине çаван чухне хам курса ăнлантăм, – каласа кăтартать малтанхи çул çӳрев пирки Карина. Сăмах май, хĕр вырăсла яка та тĕрĕс пуплет, сайра усă куракан сăмахсене те пĕлтерĕшне кура вырăнлă меллештерет.

– Пулас филологсенчен кирек кам та практикăна аякка кайма пултарать-и? – тĕлĕнсе тĕпчетĕп ют çĕр-шыв студентĕнчен.

– Пирĕн факультетра çакăн пек йĕрке: тăван чĕлхесĕр пуçне 2-3 ют чĕлхе суйласа вёренмелле. Эпĕ акăлчан тата вырăс чĕлхисене кăмăлларăм. Диплом илсен вёрентекен пулăп, çавăнпа та кирек хăш чĕлхене те лайăх пĕлме тивĕç. Виçĕ уйăхлăх практикăна университет ертӳлĕхĕ ахальтен çирĕплетмен. Юлташăмсем Мускаври, Питĕрти шкулсенче хăнăху илеççĕ. Чăн та, унта пурăнма хакла ларать ĕнтĕ.

Карина Фрис, халĕччен чăвашсем çинчен пачах илтменскер /хăйĕн сăмахĕпе – Раççейре сахал йышлă халăх чылайăн пирки илтнĕ, вĕсем çинчен уйрăммăн – пĕлмен/ Шупашкара мĕнле лекнĕ-ха? Кун пирки акă мĕнле хурав пулчĕ:

– Кукамайăн тусĕ Екатерина /шел, хушаматне пĕлместĕп/ Пĕтĕм тĕнчери нацисен пĕрлĕхĕнче ĕçлет. Çак организацине Шупашкар хулин вёрентӳ мониторингĕн центрĕ ĕçлĕ çыхăнусем йĕркеленĕ-мĕн. Шăпах çав центр йыхравĕпе çула тухрăм та сирĕн тăрăха.

Шăрттанпа, хуплупа сăйланă

– Пĕрремĕш хут, çитменнине хĕл варринче хăнана килнĕ çынран мĕн çинчен ыйтассине чухлатăн пулĕ: малтанхи самантсенче чăваш çĕрĕ çинче хăвна мĕнле туйрăн?

– Германире хĕл çемçерех. Эпĕ çула пуçтарăннă чухне 5 градус сивĕччĕ. Кăçал юр пачах çуман. Кунта шăпах шартлама сивĕ кунсемччĕ: 25-30 градус, кун чухлĕ юр нихăçан та курман! Тĕп хулари кӳлмек таврашĕнче уçăлса çӳренине нихăçан та манмăп: юр ĕмĕлкинче тĕрлĕ тĕслĕ çутăсем – иллюминаци хунарĕсем – юмахри пек илемлĕ. Чăвашсем – тĕлĕнмелле вашават. Ăçта пыратăн – тӳрех сĕтел хушшине чĕнеççĕ, кучченеç сĕнеççĕ. Нимĕçсем ку енчен асăрхануллă темелле-ши: чи малтанхи минутсенчи хутшăнура дистанци тытаççĕ. Кăмăла ларакан çынпа кăна «уçăлаççĕ» вĕсем.

– Виççĕмĕш уйăх Шупашкарта пурăнса чăвашла та вёренме тытăнатăн пуль? – шӳтлесе ыйтатăп Каринăран.

– Акă паян кăна улттăмĕш классем мана чăвашла вуннă таран шутлама вёрентрĕç: пĕрре, иккĕ, виççĕ... /йăнăшмарĕ! – **Авт.**/ «Салам», «питĕ лайăх», «тавтапуç», «атте», «анне», «асатте», «асанне», «кил», «кай», «эпĕ сана юрататăп»... – тепре килсен чăвашла ытларах сăмах вёренме тăрăшăп. Эпĕ 37-мĕш шкул директорĕн Р.Сосновăн хваттерĕнче пурăнатăп. Пĕррехинче Римма Александровнăн аппăшĕ патне хăнана кайрăмăр. Хваттере кĕрсен: «Салам, Тамара аппа», – терĕм. Чăвашла сывлăх суннинчен хĕрарăм малтанах тĕлĕнмерĕ. Йăмăкĕ ăна эпĕ нимĕç хĕрĕ пулни пирки каласан тин «куçне уçрĕ». Тамара Александровна патĕнче чăваш апатçимĕçне ас тиврĕм: вăл мана шăрттанпа, хуплупа хăналарĕ. Питĕ тутлăччĕ!

«77 кун – Раççейре»

Çакăн пек ятпа Карина Фрис хăйĕн практика вăхăтĕнчи ĕçĕ-хĕлĕ çинчен презентаци хатĕрленĕ. Унпа 37-мĕш шкулта вёрентекенсемпе вёренекенсене паллаштарнă. 10 А класра ăс пухакан Татьяна Васильевăпа иккĕшĕ наука-практика конференцийĕ валли «Истори ас тăвăмĕ» темăпа тĕпчев хатĕрленĕ. Асăннă проектпа шкулта пĕрремĕш вырăн йышăннă.

– Наци библиотекинче «Дмитриев вулавăсене» хутшăнма тӳр килчĕ. Шупашкарта иртнĕ Шотланди фестивалĕнче эпĕ вырăсла сăвва – Роберт Бернсăн «Любовь как роза...» хайлавне – вуларăм. Пурте хыттăн алă çупни хавхалантарчĕ. Вырăс драма театрĕнче «Преступление и наказание» спектакль куртăмăр. Достоевскин нимĕçле куçарăвĕпе унччене паллашнăран чиперех ăнлантăм. А.Николаев ячĕллĕ ачапăча паркĕнчи Çăварни уявĕ, шкулти Çар мухтавĕн музейĕнчи экскурси-урок... – кашни мероприяти асăмра юлĕ, – профессие хăнăхас кунĕсем чăннипех кăсăклă иртнипе кăмăллă пулас педагог.

Кĕçĕн классенчи уроксем унăн практика программине кĕмеççĕ, анчах шăпăрлансен кăмăлне епле хирĕç кайăн-ха? Çамрăк «учитель» виççĕмĕшсемпе паллашма тĕв тунă: «Госпожа Фрис теççĕ мана е Карина тесен те кӳренмĕп». Раççей шкулĕнче вёренекеншĕн ку – кĕтменлĕх. Эпир вёрентекене ячĕпе ашшĕ ятне каласа чĕнетпĕр-çке. Нимĕçсен – апла мар. Шкул ачисемпе студентсем мĕн вёренсе тухиччене ятне пĕлмесен те пултараççĕ. Вĕсен йăли тăрăх – хушамат çумне «госпожа» е «господин» сăмах кăна хушăнать.

– Пуçламăш классем эпĕ сĕннипе килĕшменрен ачасене çапла каларăм: «Манăн атте Маркус ятлă. Эппин, Карина Марковна тесе чĕнме пултаратăр». Тинех килĕшрĕç, – йăл кулать хитре шап-шурă шăлĕсене кăтартса чиперкке.

– Чăваш Енрен тăван килне таврăнсан çул çӳрев çинчен «анлă доклад» тутарĕç-и?

– Эпир практика пирки отчет парса аппаланмастпăр: кам мĕнле пĕлӳ илни вёренӳре ахалех палăрĕ. Хамăн кăмăлпа вара пысăк аудитори умĕнче Раççейри 77 кун çинчен каласас килет. Сирĕн пата тепре килес ĕмĕтĕм пур: кăçал юпа уйăхĕнче иртекен «Чăваш Енри Германи кунĕсем» мероприятие хутшăнма йыхрав илтĕм.

■ **Ирина ИВАНОВА**

Культура çулталăкне – анлă çул

Хатĕрленĕвĕн юлашки ĕçĕсем вĕçленчĕç, шкул шăпланчĕ. Вăхăт та чарăннă пек туйăнать çак самантра... Часах шкул алăкĕ васкамасăр уçăлса хупăнма пуçларĕ. Кĕтнĕ хăнасем – пĕрин хыççăн тепри – уяв кĕрекине ларма васкарĕç. Çурхи уçă çилпе «килсе кĕчĕ» Çĕмĕрлери пĕрремĕш вăтам шкула Культура çулталăкĕ.

Уява тĕплĕн хатĕрленнĕ. Алăкран кĕрсенех хăнасене пуçламăш шкулта вёренекен ачасен ĕçĕсенчен йĕркеленĕ ал ĕç выставки тыткăнларĕ. Мĕн кăна çук кунта! Тĕслĕ хутран, тăмран, кĕленче-савăтран, типĕтнĕ çулçăсенчен ăсталанă теттесем куракансемшĕн пĕринчен тепри асамлăрах пек туйăнчĕç.

Иккĕмĕш хутра тĕрĕ ăстисен «Юратнăран» куравĕ хăй патне илĕртрĕ. Ăна шкулти пултарулăх ушкăнĕ хатĕрленĕ. «Ачипе амăшĕ», «Пĕчĕк пепке», «Сĕрме купăсçă», «Пĕрремĕш тĕл пулу» пир çинчи ӳкерчĕк-тĕрĕсене хăнасем уйрăмах кăмăлларĕç.

Шкул коридорĕпе вăрахха малалла утатпăр. Акă пире вунпĕрмĕш класра вёренекен Юлия Егоровăпа тăххăрмĕш класри Антон Дроздов тата тепĕр курава йыхравлаççĕ. Кунта Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн Илья Степанович Клочков фотохудожникăн «Çулсем – манăн пуянлăх» фотовыставкине вырнаçтарнă иккен. Çапла эпир сисмесĕрех сăн ӳкерчĕксем илĕртӳллĕ тĕнчине лекетпĕр. Ăста фотохудожник пире республикăри паллă вырăнсемпе, ăстаçăсемпе, пултаруллă çынсемпе паллаштарать. Сăн ӳкерчĕксем çинче ачасемпе çамрăксем чылай. Илья Степанович вĕсен чун тасалăхне, малашлăха талпăннине уççăн кăтартса парать.

Хăнасене уяв залне йыхравларĕç. Шкулти «Дрозды» театр студийĕ тата вĕсен ертӳçи Елена Анатольевна Дроздова хăнасене юрă-ташăпа тытăнларĕç. Пухăннисем çамрăк артистсене тăваллăн алă çупса тав турĕç.

■ **Любовь ИСАКОВА.**

Çĕмĕрле хули.

Илья КЛОЧКОВ сăн ӳкерчĕкĕ

Кăларăма Ирина ИВАНОВА хатĕрленĕ.

Килти хуçалăх

• Сан валли, пахчаçă

Кăмпаран çăлатпăр

Сăнаса пăхăр-ха: сирĕн садри йывăçсем çинче иртнĕ çулхи типнĕ çимĕçсем çакăнса тăма пултараççĕ. Çуркунне вĕсем ўксе çĕршĕн удобрени вырăнне пулĕç тетĕр-и? Çапла пулмасăр! Тĕрĕссипе, типнĕ пан улмире, сливăра, грушăра усăллă япаласем пачах та çук, вĕсенче кăмпа чирĕсен микробĕсем хĕл каçнă. Çанталăк кăштах ăшăтсанах ўсен-тăран чирĕсене саракансем чĕрĕлеççĕ, йывăçсене чир ертме пуçлаççĕ. Çавăнпа та вăрăм патак илмелле те типнĕ çимĕçсене шаккаса тухмалла. Пĕлтĕр çĕр çинчен пухайманнисене те пуçтармалла. Çаксене веçех çунтарсан шанчăклăрах. Чи кирли – сада ерекен чирсенчен хăтарасси.

• Çурхи ĕçсем

Йывăç хуппине хĕвел çунтарасран хўтĕлемелле

Çуллаччен питĕ нумай вăхăт пек туйăнать. Йывăçсене халех ĕнтĕ пачах та çăмăл мар. Çуркунне температура улшăнсах тăрать-çке-ха: кăнтăрла хĕвел йывăç вуллисене хĕртет, çĕрле палăрмаллах сивĕтет – çавна пула йывăç хуппи çурăлать.

Опытлă пахчаçăсем кĕркунне вĕçĕнчех йывăç вуллисене шураторçĕ, çак ĕçе сивĕсем умĕн туса ĕлкĕреймен тĕк – васкăр.

Кивĕ хаçатсемпе усă курма пулать. Йывăç вуллисене хаçатпа чĕркемелле, çирĕплетме хулăн çиппе çыхмалла. Темиçе ярнелĕх хўтлĕх хатĕр.

Лартмалли вăхăт çитет

Улма-çырла йывăç-тĕмĕсене хăçан лартсан лайăхрах – çуркунне е кĕркунне? Улмуççи, груша, слива, чие тĕмĕ кĕркунне те, çуркунне те лайăх чĕрĕлет – лартмалли вăхăтсене çирĕп пăхăнмалла çеç. Иçĕм çырли, чие лартмалли чи лайăх кунсем – юр ирĕлсе пĕтсенех: ăшша юратакан культурăсем хĕле хирĕç шăнма пултараççĕ. Улма-çырла тĕмĕсем те çуркунне лартнине килĕштереççĕ – ку ĕçе кĕрхи кунсене хăварсан вĕсене лайăх хупламалла.

Йывăç-тĕм туяниччен чи малтанах ăçта лартассине палăртмалла. Тĕслĕхрен, улмуççи, груша, чие, слива питех тиркевлĕ мар – вĕсем хĕвел çинче те, сулхăнрах çĕрте те аванах аталанаççĕ. Иçĕм çырли валли хĕвел лайăх ўкекен вырăна суйласа илмелле. Тăпра мĕнлерех пулни те пысăк пĕлтерĕшлĕ – чухăн çĕрсем çинче малтанах тарăнрах шăтăк чавмалла, унта пулăхлă тăпра, çĕрнĕ тислĕк хушса варăнтармалла.

Лартас умĕн çак йĕркесене пăхăнни те вырăнлă. Пĕрремĕшĕнчен, папкисем çурса яман йывăçсене кăна туянмалла. Вĕсене тĕрĕслемелле: пĕр папкине татса илмелле, уçмалла, ешĕл тĕс пуррине пăхмалла. Пур пулсан – чиперех, йывăça туянма юрать. Иккĕмĕшĕнчен, йывăç-тĕм тымарне нўрлĕ çĕтĕкпе чĕркемелле.

Дачăна /пахчана/ таврăнсанах йывăç-тĕме сулхăнрах вырăна хумалла, лайăх пăхмалла. Типнĕ туратсене касмалла.

10 литр шывра тымара лайăх аталанма пулăшакан 2 таблетка е капсула /«Корнерост», «Гетероауксин», «Энерген»/ ирĕлтермелле. Пўлĕмри температурăллă шывпа усă курмалла. Йывăç-тĕме хатĕрленĕ ирĕлчĕке пĕр талăклăха ямалла. Тепĕр кунне лартма юрать.

• Те ĕненмелле, те çук...

Шута илме

● Çўп-çап витрине хĕвел аннă хыççăн тăкмаççĕ – укçасăр тăрса юлăн.

● Хăнасем килтен тухса кайсанах урайне шăлма хушман – вĕсен çулĕ ăнăçмĕ.

● Пысăк уявсем, тĕслĕхрен, Мăн кун çывхарса килнĕ самантсенче урайне шăлма юрамасть – ырра мар.

● Пўртре иккĕн харăсах урай шăлмаççĕ – хирĕçў сиксе тухма пултарать.

● Ăнăçу яланах сирĕнпе юнашар пултăр тесен кашни каçах çĕрле урайне шăлмалла.

• Мăн кун типпинче çиме

Çĕр улми рулечĕ кăмпапа

12 çĕр улми, 2 апат кашăкĕ çăнăх, çавăн чухлех вĕтетнĕ сухари кирлĕ. Ăшне хума типĕтнĕ 50 грамм кăмпа, 2 пуç сухан, 2 апат кашăкĕ ўсен-тăран çăвĕ, тутине кура тăварпа пăрăç илмелле.

Çĕр улмине пĕçермелле, нимĕрлемелле, çăнăх хушса чуста çăрмалла. Çу сĕрнĕ противень çине вĕтетнĕ сухари сапмалла, ун çине 1 сантиметр хулăнăш çĕр улми нимĕрне вырнаçтармалла, çиеле – пĕçерсе суханпа ăшаланă кăмпана /чи малтан ăна шўтермелле/. Рулет тутлăрах пултăр тесен ăшлăха икĕ кашăк кăмпа шўрпи хушмалла. Тутине кура тăварпа пăрăç сапмалла. Кăмпа çийĕн каллех çĕр улми нимĕрне вырнаçтармалла. Рулет пек çавăрмалла, сухари сапмалла, духовкăра пĕçермелле.

Кукăль

Кăштах сахăр çăнăхĕ, çăнăх, манна кĕрпи, ванилин, разрыхлитель илсе хутăштармалла. Ку типĕ хутăш пулать. Пан улми хуппине шуратмалла, пан улмине теркăпа хырмалла, сахăр песукĕпе корица хушмалла. Сийĕн-сийĕн хумалла – типĕ хутăш, пан улми. Çиелте – типĕ хутăш. Духовкăна лартмалла.

Пан улмипе кишĕр вăлчи

Кишĕре пысăк касăксем туса касмалла, ўсен-тăран çăвĕнче ăшаламалла, çаврашкан тураса ăшаланă сухан, пан улми касăкĕсем хушмалла. Пурне те аш арманне ярса авăртмалла, кăштах тăварпа сахăр хушмалла, çатма çинче тепĕр хут вĕрилентермелле.

Антонина СЕРГЕЕВА хатĕрленĕ.

Хўтлĕх

Шанчăка çухатмасăр

● *Пĕрле пухăнсан /Куславккари вырăнти организаци архивĕнчен/.*

Пĕтĕм Раççейри Куç курманнисен обществин Куславкка районĕнчи вырăнти организацийĕ çак тăрăхри 25 ял-хулари тата Вăрмар районĕнчи 37 ялти 200-е яхăн инвалида /ытларах пайĕ – аслă ăру çыннисем/ пĕрлештерсе тăрать. Ăна Чăваш Республикин социаллă пулăшăвăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Елена Морева 22 çул ертсе пырать.

– Куç курман инвалидсемпе ĕçлессине общественноçпа çирĕп çыхăнусем тытса йĕркелетпĕр, – каласа кăтартать Елена Александровна. – Вырăнти администраци, Пенси фончĕн, халăхăн социаллă хўтлĕх пайĕн, районсенчи вулавăш, ятарлă вулавăш ĕçченĕсемпе, тухтăрсемпе, культура ĕçченĕсемпе тĕл пулусем ирттеретпĕр. Вĕсем тивĕçлĕ пулăшу парассинчен нихăçан та пăрăнмаççĕ.

Е.Морева инвалидсене тупса палăртас, вырăнти организацие йышăнас тĕлĕшпе çине тăрать: Пенси фондне, окулистсем патне час-часах шăнкăравлать – туслă йышпа йывăрлăхсене çĕнтерме ансатрахçке. Акă нумаях пулмасть В.Иванов ыйтнипе «Куç микрохирургийĕ» МНТК сотрудникĕсемпе çыхăннă, кирлĕ сĕнўсем илнĕ, каярах вĕсене инвалидсене ăнлантарса панă. Вырăнти организацире инвалид ачасемпе ĕçлесси пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чир шала каймасть-и, ача вăхăтра сиплев илет-и – нумай ыйту канăççăрлантарать хăйĕн пурнăçне инвалидсене халалланă хĕрарăма. Паллах, çăмăл мар – икĕ района та ĕлкĕрмелле, кулленхи ыйтусене татса панă чухне бюро членĕсемпе, групоргсемпе канашламасăр май çук. Йывăр чирлисем патне килĕсене çўреме тивет – вĕсемшĕн эмелпе сипленнисĕр пуçне ăшă сăмах, инкек алăкран шаккасан пĕччеллĕхре хăварманни темрен те паха.

Куллен вун-вун çынпа тĕл пулма, пулăшу кўме тивет. Сăмахран, пĕлтĕр 165 инвалида йышăннă. Икĕ районта та кашни уйăхрах куç курманнисен кунĕсене ирттереççĕ. Кичемленсе, пусăрăнса лармаççĕ, шанчăка çухатмасăр пурăнаççĕ, тĕрлĕ хаçат-журнал çырăнса илеççĕ, унти статьясене сўтсе яваççĕ /сăмах май, пирĕн «Хыпар» Издательство çурчĕ кăларса тăракан хаçатсене те килĕштерсе вуласç�ерĕ/. Вăрмарта акă районти вулавăш ĕçченĕсем куç курманнисен обществин членĕсене Чăваш чĕлхи уявне яваçтарнă, И.Я.Яковлев 165 çул тултарнă май унăн «Чăваш халăхне янă халалĕпе» паллаштарнă.

Вырăнти организацире пултарулла та хастар, тĕрлĕ енĕпе талантлă çын сахал мар. Вĕсем районта кăна мар, республикăра иртекен конкурссенче, концертсенче, фестиваль-турнирсенче те малти вырăнсене йышăнаççĕ. В.Никифоров, Г.Егоров, Н.Зайцев республикăри «Пĕрле эпир ытларах пултаратпăр» фестивальте палăрнă.

Юпа уйăхĕнче Чăваш Республикинче куç курман инвалидсен хушшинче шашка-шахмат енĕпе ирттернĕ чемпионатра Н.Зайцев, Г.Васильева, Ю.Михайлов мала тухнă. Людăпа Юля Филипповăсем республикăри инвалид ачасен «Талантсен фейерверкĕ» фестивальне хутшăннă. Ку списока малалла та тăсма пулать. Çакнашкал культура, спорт мероприятийĕсем, ăс-тăн вăйăсем хыççăн кăмăлтуйăм лайăхланать, чир-чĕр те вăхăтлăха манăçать. «Пирĕн пурнăç» стена хаçачĕ кăларса тăнă, республикăра тăван тавралăха хўтĕлессине халалланă хаçатсен конкурсне хутшăннă.

Ахальтен мар ĕнтĕ çулталăкри отчет конференцийĕнче Пĕтĕм Раççейри Куç курманнисен обществин республикăри уйрăмĕн ертўлĕхĕ Куславккасен ĕçне «питĕ лайăх» тесе палăртнă. Республикăри çакнашкал организацисен хушшинче 2013 çулхи смотр-конкурсра вĕсем виççĕмĕш вырăна тухнă.

– Пĕтĕм Раççейри Куç курманнисен обществин республикăри уйрăмĕн пуçлăхне Юрий Ефимович Сергеева, Куславкка тата Вăрмар район администрацийĕсене, инвалидсене ырă кăмăлтан пулăшакансене эпир пĕтĕм чун-чĕререн тав тăватпăр. Вĕсем пирĕн ыйтусене ăнланса йышăннипех вырăнти организаци членĕсене паллă кунсемпе, уявсемпе саламлама, кану каçĕсем, ытти мероприяти йĕркеленĕ пултаратпăр, – каласа пĕтĕмлетет Е.Морева.

Сăмах май, 2013 çулта спонсорсем /организацисем, предпринимательсем/ Куславккари организацие 169316 тенкĕлĕх /укçан тата таварсемпе/ пулăшу кўнĕ.

■ **Антонина СЕРГЕЕВА.**

Куславкка хули

ЧПУра – ăслăлăх конференцийĕ

Ака уйăхĕн 7-мĕшĕнче И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн Ăслăлăх канашĕн залĕнче Пĕтĕм Раççей студенчĕсен ăслăлăх конференцийĕ уçăлчĕ. Кăçалхипе вăл хĕрĕх саккăрмĕш хут иртет, Раççейри Культура çулталăкне халалланă.

Мероприятие пухăннисене аслă шкул ректорĕ Андрей Александров, ЧР вĕрентўпе çамрăксен политикин министрĕн çумĕ Сергей Кудряшов тата ыттисем саламларĕç. Вĕсем палăртнă тăрăх – çамрăксене ăслăлăх ĕçне хутшăнтарни пĕлтерĕшлĕ. Ку енĕпе, паллах, ЧПУ тивĕçлĕ вырăн йышăнать, наука кадрĕсем хатĕрлессипе тĕп шкул шутланать.

Тăватă пине яхăн докладчик 273 секцие пайланса техника, гуманитари тата çут çанталăк çинчен вĕрентекен наукăсем енĕпе тухса каласçĕç. Вĕсен хушшинче – Мускаври, Санкт-Петербургри, Владивостокри, Белгородри, Хусанти, Ижевскри, Чĕмпĕрти, Йошкар-Олари, Çтерлĕри /Пушкăртстан/ аслă шкулсен 564 представителĕ, чăваш хутлăхĕнчи шкулсен 239 вĕренекенĕ.

Пĕтĕм Раççей студенчĕсен ăслăлăх конференцийĕн программипе килĕшўллĕн йăлана кĕнĕ докладсем тунисĕр пуçне вĕсем ăс-тăн тупăшăвĕсене, куравсене, конкурссене, ĕçлĕ тавлашусене, олимпиадăсене, «çавра сĕтелсене», маçтăр-классене хутшăнĕç.

«Ăслăлăх эрни – 2014» çитес шăмат кунччен тăсăлать. Ака уйăхĕн 29-мĕшĕнче конференцие пĕтĕмлетсе çĕнтерўçĕсемпе призерсене чысласçĕ. Чи лайăх ĕçсен авторĕсене вĕренекен çамрăксен регионсен хушшинчи «Аслă Атăлăн çамрăклăхĕ» XVI конференцине, çамрăксен МолГород /Шупашкар/, «iВолга – 2014» /Самар облаçĕ/, «Селигер» /Тверь облаçĕ/ вĕренў форумĕсене хутшăнма сĕнеççĕ.

■ **Валентина ИЛЬИНА.**

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ўкерчĕкĕ

Кун-çул

Ят-сума тивĕçнĕ тренер

Сăн ўкерчĕкри çынсене, тен, вулакансенчен чылайăшĕ палласа та илчĕ пулĕ: Канаш хулин Хисеплĕ çыннисем, республикăри спорт кун-çулне кĕрсе юлнă Дина Федоровнăпа Владимир Яковлевич Григорьевсем. Çемье пуçлăхĕн 85 çулхи юбилейĕ çитнĕ май вĕсен утса тухнă вăрăм çулне тепĕр хут тишкерсе тухма, паллă самантсене аса илме сăлтав пурах.

Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ тренерĕ В.Григорьев хăй çуралса ўснĕ тăван хулинчи ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕнче 58 çул ĕçлет. Ленинградри физкультура институтĕнчен вĕренсе тухнă Совет Çарĕн саппасри офицерĕ малтанах тренер ĕçне пикенет, каярах нумай çул шкул коллективне ертсе пырать. Ĕçсем кал-кал пыраççĕ, спорт шкулĕн йĕлтĕрçисем хăйсен кăтартăвĕсемпе уйрăмах савăнтараççĕ. Разряд илнисен йышĕ ўсет, пултаруллисем республикăра мала тухаççĕ. Вĕсенчен пĕри, вун тăххăрти Дина Скворцова /Дина Федоровна ĕнтĕ/, 1961 çулта СССР спорт мастерĕн нормативне тултарать. Çулсем иртнĕçемĕн унăн ăсталăхĕ ўссех пырать, вăл çĕр-шыв чемпионачĕсенче те час-часах малти вырăнсене йышăнать. Ветерансен çулне çитсен те Канаш йĕлтĕрçи тата спорт шкулĕн тренерĕ тĕнче чемпионачĕсенче сахал мар ылтăн тата кĕмĕл медаль çĕнсе илет. Григорьевсен икĕ хĕрĕпе пĕр ывăлĕ те /Татьяна, Надежда, Евгений/ спортсменсен ретĕнче тăрса хăйсен савăнăçне тупаççĕ. Надежда Владимировна халĕ шкул директорĕнче ашшĕн ĕçне малалла тăсать.

Канашри 1-мĕш спорт шкулне СССР спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕн Владимир Воронковăн ятне панă. Тĕнче /1970/ тата Олимп чемпионĕ /1972/ ăсталăх çулĕ çине Владимир Яковлевич пулăшмасăр тата вĕрентмесĕр тухман. Вăл кăна мар, çĕр-çĕр яшпа хĕр чунне парса ĕçлекен вĕрентекенне тав тăвать. Ветерансем те манмаççĕ ăшă кăмăллă педагога.

● *Дина Федоровнăпа Владимир Яковлевич Григорьевсем.*

Владимир Яковлевич пурнăç çулĕ çине тухма пулăшнă çамрăксем спортри çитĕнўсемпе кăна мар савăнтарнă. Чылайăшĕ аслă пĕлў илнĕ, тĕрлĕ специальноçпа ĕçлесе ырă ята тивĕçнĕ. Сăмахран, Валерий Краснов Украинăри ял хуçалăх академийĕн профессорĕ пулнă, Игорь Казиков Раççей Олимп комитетĕнче нумай çул ĕçлет, Хусан авиаци институтне пĕтернĕ Владимир Иванов – наукăпа тĕпчев институтĕн инженерĕ, Алексей Журавлев – отставкăри подполковник. Тренер ĕçне кўлĕнни те сахал мар – Татьяна Короткова, Вера Хлыстова, Мария Воронина, Борис Морунов тата ыттисем те. Пурте вĕсем Владимир Яковлевичпа унăн măшăрне ырлăх-сывлăх, вăрăм кун-çул сунаççĕ.

■ **Юрий ПЛОТНИКОВ**

Мăнастир çуннă

Ака уйăхĕн 5-мĕшĕнче кăнтăрла Комсомольски районĕнчи Шурутри хĕрарăмсен Ивер мăнастирĕнче пушар тухнă. Ăна МЧС ĕçченĕсем тата кунти çынсем хăвăртах сўнтернĕ.

Малтанласа палăртнă тăрăх – çулăм алтарĕн сулахай пайĕнче электропралука вут хыпса илнĕрен алхасма пуçланă. Хальхи вăхăтра мăнастирте кĕлĕ ирттерме май килмест. Çав кунах унта Канаш епархийĕн ертўçи Стефан епископ çитсе курнă, лару-тăру пирки Чăваш митрополийĕн пуçлăхне Варнавăна пĕлтернĕ. Канаш епархийĕ пурне те пушара пула сиенленнĕ чиркĕве юсаса çĕнетмешкĕн май килнĕ таран пулăшма ыйтать. Мăнастир реквизичĕсене Комсомольски район администрацийĕн сайтĕнче тупма пулать.

И.БЕЛОВА.

Спорт

Ирина Баймулкина – пĕрремĕш

Владикавказра йывăр атлетика енĕпе çĕр-шыв ăмăртăвĕ вĕçленнĕ. Пирĕн ентешсем тăван ене тăватă медальпе таврăннă.

Ăмăртăвăн пĕрремĕш кунĕнчех Елчĕк пики Любовь Иноходова 48 килограмлă хĕрсен ушкăнĕнче «кĕмĕл» çĕнсе илнĕ. Унăн пиччĕшĕ, Раççей спорт мастерĕ Анатолий Иноходов икĕ енлĕ кĕрешўре 211 килограмм çĕклесе виççĕмĕш вырăн йышăннă. Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен училищин студенчĕ Дмитрий Исаковăн – «кĕмĕл». Чи сумлă ята Етĕрне хĕрĕ Ирина Баймулкина тивĕçнĕ. Геннадий Иванов тренер патĕнче ăсталăха туптаканскер çĕр-шыв ăмăртăвĕнче пĕрре мар çĕнтернĕ, пĕлтĕр Европăра та пĕрремĕш пулнă. Кăçал утă уйăхĕнче 19-ти спортсменка Хусанта иртекен тĕнче чемпионатĕнче республика чысне хўтĕлĕ.

А.МИХАЙЛОВ.

Факс: /8352/ 28-83-70. E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерў
Тел.: 28-83-70. 316-мĕш пўлĕмре йышăнаççĕ.

Саламлатпăр



Хаклăран та хаклă, юратнă çыннăмăра – Вăрнар районĕнчи Кивĕ Шуртан ялĕнче пурăнакан Виталий Сергеевич НИКИФОРОВА – 75 çулхи юбилейпе чĕрери чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр.

Çулсем иртни ан кўтĕр тунсăх,
Вăй-халу пултăр иксĕлми.
Сана сунатпăр çирĕп сывлăх
Тата телей ытам тулли.
Ĕмĕр сукмакĕ санăн яланах такăр та çутă пултăр. Ачусемпе мăнукусен юратăвĕпе килнĕ нумай-нумай çул пурăн.

Мăшăрĕ, хĕрĕсемпе кĕрўшĕсем, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем, хăтисемпе тăхлачисем.

В соответствии с распоряжением администрации Порецкого района от 04 апреля 2014г. № 54-р Комитет по управлению муниципальным имуществом Порецкого района сообщает, что **14 мая 2014 года** в 10 часов в здании администрации состоится аукцион по продаже права на заключение договора аренды земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения с кадастровым номером 21:18:120206:336 площадью 1351 кв.м., расположенного по адресу: Чувашская Республика, Порецкий район, Порецкое сельское поселение, для сельскохозяйственного использования.

Начальный размер годовой арендной платы - 5000,00 рублей. Шаг аукциона - 5% от начального размера годовой арендной платы - 250,00 рублей. Размер задатка - 20% от начального размера годовой арендной платы - 1000,00 рублей.

Обременения (ограничения) использования земельного участка отсутствуют.

Организатор аукциона - Комитет по управлению муниципальным имуществом Порецкого района.

Условия аукциона:

Срок аренды земельного участка - 10 лет.

Аукцион является открытым по составу участников и форме подачи заявок.

Дата начала приема заявок: 09 апреля 2014 года.

Дата окончания приема заявок: 12 мая 2014 года.

Прием заявок и документов (с описью) для участия в аукционе осуществляется по рабочим дням в период срока приема заявок с 8.00 часов до 17.00 часов по адресу: Чувашская Республика, Порецкий район, с. Порецкое, ул. Ленина, д. 3 (отдел экономики, земельных и имущественных отношений администрации Порецкого района) или по федеральной почте (с описью вложения) по адресу: 429020, Чувашская Республика, Порецкий район, с. Порецкое, ул. Ленина, д.3. Справки (в том числе о форме заявки об участии в аукционе, о дате, времени и порядке осмотра земельного участка на местности) по телефону: 2-12-03.

Срок принятия решения об отказе в проведении аукциона- не позднее 15 дней до даты проведения аукциона.

Для участия в аукционе заявители представляют следующие документы:

- заявка на участие в аукционе по установленной форме с указанием реквизитов счета для возврата задатка;
- платежный документ с отметкой банка плательщика об исполнении, подтверждающий внесение задатка.

При подаче заявки физическое лицо предъявляет документ, удостоверяющий личность. В случае подачи заявки представителем претендента предъявляется доверенность.

Юридическое лицо дополнительно прилагает к заявке нотариально заверенные копии учредительных документов и свидетельства о государственной регистрации юридического лица, а также выписку из решения уполномоченного органа юридического лица о совершении сделки (если это необходимо в соответствии с учредительными документами претендента).

Перечень документов, предоставляемых претендентам для ознакомления:

- кадастровый паспорт земельного участка;
- отчет о рыночной стоимости годового размера арендной платы за земельный участок;
- проект договора аренды земельного участка.

Порядок внесения задатка: до 12 мая 2014г. путем перечисления денежных средств в банк на расчетный счет № 40302810675170004003 в Чувашском ОСБ №8613 г.Чебоксары, БИК 049706609, ИНН 2113001841, КПП 211301001, ОКТМО 97635000, по коду бюджетной классификации 99311105025100000120, наименование получателя платежа: финансовый отдел администрации Порецкого района (Администрация Порецкого района), л/с 05133000022, назначение платежа: задаток для участия в аукционе по продаже права на заключение договора аренды земельного участка.

Определение участников аукциона состоится в отделе экономики, земельных и имущественных отношений администрации Порецкого района 13 мая 2014 года в 10.00 часов.

Регистрация участников аукциона проводится в отделе экономики, земельных и имущественных администрации Порецкого района 14 мая 2014 года с 9.00 час. до 9.45 час.

Подведение итогов аукциона состоится в отделе экономики, земельных и имущественных отношений администрации Порецкого района 14 мая 2014 года в 14.00 часов.

Порядок определения победителя аукциона - победителем признается лицо, предложившее максимальный размер годовой арендной платы.

Обязательства победителя аукциона:

- заключение договора аренды земельного участка в течение 5 дней со дня проведения аукциона.

Администрации Янтиковского сельского поселения Янтиковского района "12" мая 2014 г. в 14.00 часов объявляет торги (открытый аукцион) по продаже земельных участков без обременения:

Характеристика объекта купли-продажи земельных участков

лот №1 - земельный участок с кадастровым номером: 21:26:250501:454, категории "земель сельскохозяйственного назначения", разрешенный вид использования "для ведения сельскохозяйственного производства": местоположение: Чувашская Республика - Чувашия, р-н Янтиковский, с/пос. Янтиковское, общей площадью 120000 кв.м. Начальная (стартовая аукционная) цена участка - 50 400 рублей.

Заявки на участие в аукционе принимаются до 5 мая 2014 г.

За справками и информацией обращаться: Янтиковский район, с. Янтиково, пр. Ленина, д. 21, администрация Янтиковского сельского поселения и на сайте Янтиковского сельского поселения Янтиковского района по адресу: http://gov.cap.ru/Default.aspx?gov_id=542 в разделе объявления.

ПРОДАЮ

7.Срубы для бани. Т. 37-28-74.

178.Цемент, гравмассу, песок. Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĕ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĕ
Федерации сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800,
"Хыпар"-шăмат кун" – 78353,
"Çамрăксен хаçачĕ" – 54804,
"Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515,
"Сывлăх" – 11524,
"Кил-çурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор В.Н.БАГАДЕРОВА

ТЕЛЕФОНСЕМ
Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĕ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĕ, III ХУТ, "ХЫПАР".
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренў пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерўсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.
hypar2008@rambler.ru
Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта: hypar1@mail.ru hypar@mail.ru
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.
РЕКЛАМĂПА ПĕЛТЕРЎСЕНЕ 316-мĕш пўлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерўсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тўлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшўллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7512. Заказ 1254.